чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

ШĂМАТ КУН
2014, нарăс /февраль/
1

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

18-19 /26424-26425/ №№ Хакĕ ирĕклĕ www.hypar.ru

Ыр кăмăллăх марафонĕ

# Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн

*Кăрлач уйăхĕн 31-мĕшĕнче Республикăри хевтесĕр ачасемпе çул çитмен çамрăксен реабилитаци центрĕнче Раççей ача-пăча фончĕн регион уйрăмĕ пуçарнипе «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыр кăмăллăх фончĕ Чăваш Енре вун саккăрмĕш хут старт илчĕ.*


ЧР ПА пресс-службин сăн ӳкерчĕкĕ

Унăн тĕллевĕ – сусăр ачасене, тăлăхсене, ашшĕ-амăшĕн ăшшисĕр юлнисене хӳтĕлемешкĕн, сахал тупăшлă çемьесенчи çамрăксене пулăшмашкăн тата ачалăхпа çыхăннă ыр кăмăллăх программисене пурнăçа кĕртмешкĕн укçа-тенкĕ пухасси.

Иртнĕ çул, тĕслĕхрен, унăн пухмачне 8233719 тенкĕлĕх пуянлатнăччĕ. Нухрата Раççей ача-пăча фончĕн программисемпе килĕшӳллĕн йывăр чирлĕ ачасене сиплеме, диспансерсен, хула-район больницисен пурлăх никĕсне тĕреклетме, ясли-садсене, интернат шкулсене, ача çурчĕсене выляв хатĕрĕсемпе тивĕçтерме усă курнă.

Ача-пăча фончĕн республикăри уйрăмĕн председателĕ Юрий Кислов общество организацийĕн ыр кăмăллăх ĕçĕсемпе паллаштарнă май республикăра «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» марафон уçăлнине пĕлтерчĕ. «Ют ачасем çук, вĕсем пурте пирĕн» чĕнӳпе пурăнакан хастарсен чун хавалĕпе тытăнса тăракан общество организацийĕн пурне те хăй хӳттине илмешкĕн хевте çитес çуккине палăртса вăл хавхалантарса пынипе несĕлĕмĕрсен ламран лама пыракан ниме мелĕпе Чăваш хутлăхĕн ырă çыннисене тенкĕ çумне тенкĕ хушса çамрăк ентешĕмĕрсен йывăр шăпине çăмăллатма май тупмашкăн чĕнсе каларĕ.

Уява Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин Вĕренӳ комитечĕн председателĕн çумĕ Алена Аршинова хутшăнчĕç. Сăмах май, вĕсене «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» марафона хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен комитетăн çум председателĕсем пулмашкăн шаннă, ертӳçи – ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Шупашкарти 2-мĕш çăкăр завочĕн директорĕ – Юрий Кислов. Михаил Васильевичпа Алена Игоревна сăваплă акцие хăйсен сумлă тӳпине хывма шантарчĕç, ыттисене те пуçаруллă хутшăнма чĕнсе каларĕç.

Мероприяти умĕн хăнасем хевтесĕрсен реабилитаци центрĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă май социаллă учреждение республикăра кăна мар, çĕр-шывра та кăтартуллисенчен пĕри пулмаллине палăртрĕç. Сăлтавсăр мар паллах. Чикĕ леш енчен килнĕ хăнасем унăн ĕçне пысăка хурса хакланă иккен. Тĕрĕссипе, халĕ те малтисен шутĕнче-ха вăл, хевтесĕр ачасене пурнăçа хăнăхтармашкăн кунта комлекслă майсемпе туллин усă кураççĕ. Кадрсем ăста та пултаруллă. Çапах та татса паман ыйтусем те пур иккен.

Ĕмĕрлĕх япала пулма пултараймасть, вăхăт иртнĕ май çĕнни те кивелет. Акă, тĕслĕхрен, церебраль шалкăмĕпе нушаланакан ачасене реабилитацилеме усă куракан «Атлант» костюмсенех илер. Вĕсем икĕ çултан хăйсен эффективлăхне çухатаççĕ. Çавна май унашкаллисем социаллă учреждение çитмеççĕ. Хакĕ те йӳнех мар, пĕри 36 пин тенкĕ. Марафона уçнă хыççăнах ЧНК президенчĕ, «ТУС» строительство фирмин генеральнăй директорĕ Николай Угаслов сиплев хатĕрне туянмашкăн 50 пин тенкĕлĕх сертификат парнелерĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин регион уйрăмĕ ячĕпе Николай Малов депутат тата 50 пин тенкĕ хушрĕ. Çакă пуçламăшĕ кăна-ха...

Юрий Кислов пĕлтернĕ тăрăх – акцие утă уйăхĕнче пĕтĕмлетĕç. Çак тĕллевпе пухăнмалли вырăн хальлĕхе уçăмлă мар, мĕншĕн тесен ăна пĕр çын пуçне чи нумай взнос хывнă муниципалитетра ирттерес тата çĕнтерӳçĕне чыслас шухăшлă.

Ыр кăмăллăх марафонĕн пухмачне предприяти-организаци, уйрăм çынсем кăна мар, бизнес представителĕсем те хăйсен сумлă тӳпине хывасси иккĕлентермест.

Сăваплă акцие кашниех хутшăнма пултарать – «Раççей ача-пăча фончĕн» регион уйрăмне /Шупашкар хули, Петров урамĕ, 7-мĕш çурт/ пымалла е /8352/ 62-89-42 телефонпа шăнкăравламалла. Укçана марафон счечĕ çине куçарма юрать. Унăн реквизичĕсем:

**ЧРО ООБФ «Российский детский фонд»**
**ИНН 2128005408/КПП213001001**
**Р/с 40703810075220160067**
**в Чувашском ОСБ № 8613 г.Чебоксары**
**БИК 049706609, кор/с 30101810300000000609**
**Кăçал унăн пухмачне СМС ярса та пуянлатма пулать.**

■ **Валентина СМИРНОВА**

# Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

# Конкурс çĕнтерӳçисене чысларĕç

*Чăвашпотребсоюзпа республикăри массăллă информаци хатĕрĕсем пĕр-пĕринпе нумай çул туслă çыхăну тытса ĕçлеççĕ. Хаçатсемпе радио хыпарлав кăларăмĕсенче потребительсен обществисен ĕç-хĕлĕпе, ял çыннисен пурнăçне çăмăллатас тĕлĕшпе пурнăçа кĕртекен çĕнĕлĕхсемпе тĕплĕн паллаштараççĕ, хастар ĕçченĕсем çинчен каласа параççĕ.*



● *Чăвашпотребсоюз ертӳçисемпе конкурс çĕнтерӳçисем.*

Пирĕн кооператорсен çитĕнĕвĕсем курăмлă: Чăвашпотребсоюз – çĕр-шывра чи лайăххисенчен пĕри, Раççей Центросоюзĕ ирттерекен экономика ăмăртăвĕнче çултан-çул малти вырăнсене йышăнать. Сăмах май, пĕлтĕрхи чӳк уйăхĕнче унăн Канашĕн председателĕ Валерий Павлов Раççей Президенчĕн Тав хутне тивĕçнĕ.

Республикăри потребительсен обществисен союзĕ хăй те тĕрлĕ конкурс чылай ирттерет. Йăлана кĕнĕ сумлă çулленхи тупăшусенчен пĕри – кооператорсен ĕçне çутатакан чи лайăх массăллă информаци хатĕрĕсемпе уйрăм журналистсене палăртакканни. Чăваш Енре потребитель кооперацийĕ йĕркеленнĕренпе 120 çул çитнине халалланă «Потребитель кооперацийĕ – 2013» конкурс пĕтĕмлетĕвне хаçат вулаканĕсене пĕлтерĕччĕ ĕнтĕ. Кĕçнерни кун Чăвашпотребсоюзра çĕнтерӳçĕсене чысларĕç.

Чăвашпотребсоюз Канашĕн председателĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Валерий Павлов тата Правлени председателĕ Людмила Абрамова «Хыпар» Издательство çурчĕн директорне-тĕп редакторне Алексей Леонтьева /«Хыпар» хаçат пĕрремĕш вырăнта/, «Сывлăх» хаçат редакторне Алина Лукиянована, «Чăваш Ен» телерадиокомпани корреспондентне Николай Мулянова, Наци радиовĕн аслă редакторне Владимир Егорова, Чăвашпотребсоюзăн обществăпа çыхăну тытас енĕпе ĕçлекен специалистне Надежда Антоновăна, ЧР потребитель кооперацийĕн ĕçченĕсен тата предпринимательсен профсоюзĕн инспекторне Дмитрий Зинова саламларĕç, дипломсем пачĕç, малашне те килĕштерсе ĕçлессе шаннине палăртрĕç. Мала тухнă район хаçачĕсемпе уйрăм корреспонденсене вырăнта чыслĕç.

■ **А.СВЕТЛОВА.**

В.СОРОКИН сăн ӳкерчĕкĕ

# Пĕр танлăха туллин тивĕçтернĕ

*Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер республика прокуратурин коллегийĕн анлă ларăвне хутшăннă, унта 2013 çулта саккунлăха тата право йĕркине çирĕплетес енĕпе тунă ĕçе пĕтĕмлетнĕ, прокуратура ĕç-хĕлне лайăхлатассин малашлăхне сӳтсе явнă.*

Сăмах илнĕ май Михаил Васильевич прокуратура тата право хуралĕн органĕсен сотрудникĕсене тачă çыхăну тытса ĕçленĕшĕн тав тунă. «Влаç органĕсем тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пĕрле тухăçлă ĕçленĕ май республикăри социаллă пурнăçпа политика лару-тăрăвĕшĕн тăнăçлăх кăтартуллă. Граждансен прависемпе интересĕсене хӳтĕлес ĕçĕн нумай енĕпе юлашки çулсенче ăнăçусем турăмăр», – тенĕ Михаил Игнатьев.

Общество шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлнин кăтартăвĕсем çирĕплетнĕ тăрăх – халăх влаç тата право хуралĕн органĕсене шанассин шайĕ ӳснĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ коррупци тĕслĕхĕсем пуласран сыхланас, çавнашкал преступленисене малтанхи тапхăрсенчех тупса палăртас тата уçса парас ĕçĕн пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен каланă. «Пирĕн ĕç тухăçлăхĕ, республикăра пурăнакансем влаçа шанасси çакăнтан килет», – тенĕ вăл.

Михаил Игнатьев ЖКХ сферинчи преступленисене тупса палăртас, шалу тӳлес енĕпе нумай çул капланса пынă парăмсене пĕтерес, социаллă пурнăçпа экономика сферисенчи çивĕч ыйтусене татса парас енĕпе тунă ĕçе пысăка хурса хакланă. Чăваш Енри обществăпа политика лару-тăрăвне çирĕплетес тĕллевлĕхе малалла тăсма шантарнă.

ЧР прокурорĕ Владимир Метелин хăйĕн докладĕнче ведомствăн 2013 çулхи ĕçĕн тĕп кăтартăвĕсене пĕлтернĕ. Вăл палăртнă тăрăх – республикăри йĕркелĕхпе çыхăннă лару-тăру лайăхланнă, преступленисен шучĕ 15% чакнă. Пĕрле вăй хурса граждансен саккун умĕнчи пĕр танлăхĕн принципне тивĕçтернĕ.

Ларура çавăн пекех прокуратура сотрудникĕсен 2013 çулхи ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе йăнăшĕсене тишкернĕ, вĕсене пĕтермелли çул-йĕре палăртнă.

■ **Н.ЯКОВЛЕВ**

# Хыпарсемпе ытларах паллашаççĕ

*Чăваш Енре пурăнакансенчен ытларахăшĕ – 90% яхăн – Интернета çĕнĕ хыпарсене пĕлмешкĕн кĕрет. Çапларах кăтартусем парать Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕн социологи тĕпчевĕн пĕтĕмлетĕвĕ.*

Федераци информагентствисем – информаци тĕп çăл куçĕ: вĕсене респондентсен 46,1% вулать. Регион информресурсĕсенчен ытларах республикăн влаç органĕсен официаллă порталне кăмăллаççĕ. Ыйтăма хутшăннисен 51,3% шăпах унпа усă курать. Рейтингра иккĕмĕш – информаци ширани: респондентсен 84,8% хăйсене кăсăклантаракан ыйту хуравĕсене Интернетра тупасшăн. Виççĕмĕш вырăнта – электрон почтăпа ĕçлесси /75,9%/. Хуравсен çак варианчĕсене çамрăксем те, аслă ăрурисем те суйласа илнĕ. Ыйтăма хутшăннисен 68,9% Интернет уçлăхĕнче фильмсемпе юрă-кĕвĕ шырать, 56,1% сăн ӳкерчĕкпе видео вырнаçтарать, 46,3% – программăсем «уçласа илет», 34,9% – ĕç пирки кăсăкланать, вакансисене пăхать.

Унсăр пуçне 18-24 çулсенчи çамрăксем Интернет-вăйăсене кăмăллаççĕ /55,6%/. Анкета ыйтăвĕсене хуравланисен 25,8% – вĕсенчен ытларах пайĕ 25-34 çулсенче – патшалăх пулăшăвĕсене электрон мелпе илсе курнă.

Тĕпчеве 2013 çулхи çурлаавăн уйăхĕсенче ирттернĕ. Унта Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр, Канаш, Куславкка, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле, Етĕрне хулисенчи, Улатăр, Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсенчи 620 çынна хутшăнтарнă. Респондентсене хуравсен хăрăсах темиçе вариантне суйлама сĕннĕ.

■ **И.БЕЛОВА**

*Вĕрентӳ*

# «Йывăрлăхсене пĕрле татса парăпăр»

*Кăрлачăн 30-31-мĕшĕсенче Чăваш Енре ĕçлĕ çул çӳревпе РФ Патшалăх Думин депутачĕ Алена Аршинова пулчĕ.*

Малтанах вăл Шупашкарти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 29-мĕш шкулти вĕрентекенсемпе тĕл пулчĕ. «Çавра сĕтелте» педагогика вĕрентĕвĕн концепцийĕн проектне сӳтсе яврĕç.

Хулари ытти шкултан мĕнпе палăрса тăрать-ха асăннă шкул? Вĕренӳ заведенийĕн таврашĕнче спортпа çыхăннă тĕрлĕ учреждени – гимнастика, теннис шкулĕсем. Те вĕсен витĕмĕпе – кунта та сывлăха пиçĕхтерес енĕпе çине тăрса ĕçлени сисĕнет. Спортзал пушă тăмасть. Вăл пурлăх-хатĕр енĕпе те чухăн мар. Шкул директорĕ Виктор Павлов каланă тăрăх – ку тĕлĕшпе ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Николаев та пулăшать. Нумаях пулмасть вăл теннисла вылямалли икĕ сĕтел парнеленĕ.

Шкулăн хăйне евĕрлĕхĕ – вĕренекенсен социаллă тăрăмĕ. Йĕри-тавра – 11 общежити. Чылайăшĕ /60 процента яхăн/ ашшĕсĕр çитĕнет. Паллах, кун пек лару-тăрура ачасем хăйсене тытас йĕрки те, вĕренӳре еплерех ĕлкĕрсе пыни те раснарах.

Шкулăн уйрăмлăхĕ татах та пур: шăпах кунта православи тĕнĕн пĕрремĕш класне йĕркеленĕ. А.Аршинова унта пулса курчĕ. Ачасемпе, вĕсен ашшĕамăшĕпе, вĕрентекенсемпе каласрĕ. Асăннă класа çӳрекенсем кунăн малтанхи пайĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ программине ăса хываççĕ, кăнтăрларан вара – тĕн йăлисене хăнăхаççĕ, ӳкерме, юрлама вĕренеççĕ. Ӳсĕм халех пур: ачасем Пĕтĕм Раççей «Турă тĕнчин илемĕ» ӳкерчĕксен конкурсĕнче çĕнтерчĕ.

Патшалăх Думин депутачĕпе тĕл пулнă май педагогсем хăйсене канăçсăрлантаракан тĕрлĕ ыйту пачĕç. Акă В.Еремеева çоцпедагога хăйсене педагогсен йышне те, социаллă ĕçченсен шутне те кĕртменни пăшăрхантарать. Нимĕнле çăмăллăхсемпе те усă курайманскере банкра кредит илес тесен те педагогсен категорине пырса тивекен условисемпе тивĕçтермеççĕ-мĕн. Педагогсенчен чылайăшĕ малтан тӳлевлĕ пулнă факультатив сехечĕсене пăрахăçланипе кăмăлсăр. «Ун чухне ачасем шкулта чылайччен тытăнса тăратчĕç. Мĕн тĕрлĕ секци ĕçлеместчĕ-ши! Вĕренекенсем уроксем пĕтсен кирлĕ мар ĕçпе аппаланасран шикленме тивместчĕ», – палăртрĕ шкул ертӳçи Виктор Вениаминович çав сехетсене тавăрмашкăн пулăшма ыйтса.

Чăваш Ен интересĕсене çĕршыв «чĕринчи» парламентра хӳтĕлекен А.Аршинова ача сачĕсен ыйтăвĕпе уйрăмах тимлĕ ĕçленине халĕччен палăртман мар. Ку хутĕнче те шкул ӳсĕмне çитменнисем çинчен манмарĕ. Депутат уйрăм çынсемпе патшалăх партнерлăхĕ çинче никĕсленнĕ учрежденисем мĕнлерех ĕçленипе кăсăкланчĕ. Шупашкарти «Шкулчченхи академи» ача аталанăвĕн центрĕ – ача сачĕ 2013 çулхи çурла уйăхĕнче хута кайнă. Л.Лекарева директор пĕлтернĕ тăрăх – паян кунта 50 ача çӳрет. Муниципалитет учрежденийĕсенчен чылай уйрăлса тăрать вăл. Сăмахран, 7-рен пуçласа 20 сехетчен ĕçлекенскерте кунне 6 хутчен апат çитереççĕ.

«Паянхи кун патшалăх тунă учрежденисенче кун чухлĕ хăтлăх пуласса шанма майĕ те çук. Çавăнпа та эсир пуçарнă ĕçе малалла тăсакансем йышлăланасси те иккĕлентермест. Уйрăм çынсен садикĕсем шкул ӳсĕмне çитменнисене пĕлӳ учрежденине вырнаçтарас ыйтăва çăмăллатма чылай пулăшĕç», – терĕ Алена Игоревна.

■ **Ирина ИВАНОВА**

# «Кашнине хисеплемелле, пурнăçа лайăхлатмалла»

***Кĕçнерни кун ирех республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Тăвай районĕнчи Турикас Тушкил ял тăрăхне çитрĕ. С.Р.Илларионов фермер хуçалăхĕпе паллашрĕ. Мăйракаллă шултра выльăх витисене кĕрсе курчĕ. Сăвакан 250 ĕне. Шупашкара куллен 1,5 тонна сĕт ăсатаççĕ. Ăна 8 урамра вырнаçтарнă автоматран сутаççĕ, кашни литрĕ – 30 тенкĕ. М.Игнатьев хуçалăх ĕçне лайăх хак пачĕ. Районăн тĕп больницин поликлиникинче пулчĕ. Ăна пĕлтĕр тĕпрен юсанă, çĕнĕ медоборудовани чылай туяннă.***



Республика Пуçлăхĕ районăн культурăпа кану центрĕнче вырăнти влаç тытăмĕн, ĕç коллективĕсен представителĕсемпе канашлу ирттерчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Ванерке социаллă пурнăçпа экономикăн пĕлтĕрхи аталанăвĕ пирки отчет турĕ, районăн кăçалхи тĕллевне палăртрĕ. Лайăххине сахал мар каларĕ. Начаррине те пытармарĕ. Тăвай енре ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕр пулăх мар. Çитменнине, иртнĕ çул çанталăк шăрăх тăчĕ. Апла пулин те В.Г.Грачев фермер хуçалăхĕ кашни гектартан 16,2 ц тыр-пул пухса кĕртме пултарнă. «Красная Чувашия», «Шимкусский» ЯХПКсен тухăçĕ 8,9 тата 6,3 ц çеç. Пĕрремĕшĕ кĕрхи культура пĕр га та акса хăварайман. Пĕчĕк тата вăтам бизнес начар аталанать. Ял, вăрман, сунар хуçалăхĕнче вăй хуракансен кашни уйăхри ĕç укçи кăрлач-чӳк уйăхĕсенче 9531 тенкĕ – республикăн вăтам кăтартăвĕнчен 1099,3 тенкĕ сахалрах – пулнă. Культура çурчĕсенчен чылайăшне юсамалла.

Çынсем доклада сӳтсе явма хастар хутшăнчĕç. Çар комиссариатĕнче вăй хунă Николай Степанов: «Иртнĕ ĕмĕрте районта 24 пин çын пурăннă, – терĕ. – Унтанпа 16,2 пин çеç юлнă. Кашнине хисеплемелле, пурнăçа лайăхлатмалла. Пирĕн вара тепĕр майлă пулса пырать. Сăмахран, медицинăн васкавлă пулăшу автомашини талăксерен сывлăх хуралĕнче пĕрре кăна тăрать. Вăл пĕр ял тăрăхне кайсан тепринчи инкеке лекнĕ çынна райцентра хăвăртрах илсе çитерме машина ямаççĕ».

ЧР сывлăх сыхлавĕн министрĕ Алла Самойлова тĕп больницăн васкавлă пулăшу автомашини темиçе те шутланнине, телефонпа чĕнтернĕ вырăна вăл вăтамран 20 минутран çитнине пĕлтерчĕ.

Экономика министрĕ Владимир Аврелькин Ленин ячĕллĕ, «Дружба», «Красная Чувашия» хуçалăхсенче вăй хуракансене шалу пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк укçа виçинчен сахалрах тӳленине сивлерĕ. Виçĕ лавккара /Журавлев предпринимателĕн, «Пилеш», «Уют» хуçисен/ саккуна пăсса эрех сутнине, кун пек тĕслĕхе тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе пĕрлехи рейд ирттерессине пĕлтерчĕ. С.Волгин бизнесмен этем сывлăхне сиен кӳрекен эрех-сăра лавккисене хупма чĕнсе каларĕ. Залра ларакансем сĕнĕве алă çупса йышăнчĕç.

Турикас Тушкил ялĕнчи Людмила Камасева республика Пуçлăхне ыйту чăвашла пачĕ. «Ĕлĕк больница пирĕн ялта та пулнă – хупрĕç, – терĕ вăл. – Юн тĕрĕслеттерме унтах панă. Халĕ тĕпчеттерме райцентра каятпăр. Ăна илме Тăвайран çын яма çукши? Тепĕр ыйту. Кăçал Раççейре – Культура çулĕ. Анчах çакна сисместпĕр. Залра та Культура çулталăкĕ иртнĕ пирки вырăсла кăна çырнă. Чăваш чĕлхи пĕтсе пырать, культура юхăнать. Вĕсем ан пĕтчĕр тесе республика мĕн тăвать?»

М.Игнатьев вырăнти влаçран сцена çинчи курăнакан вырăна мĕншĕн вырăсла кăна çырнине тишкерме ыйтрĕ. «Чăваш чĕлхи пĕтмест, – терĕ ыйтăва хуравласа. – Ăна, культурăна, йăла-йĕркене аталантарассишĕн тĕрлĕ ĕç тăватпăр, хыснаран укçа чылай уйăратпăр. Уйрăммăн илсен Чăваш автономине туса хунăранпа – 100, Шупашкар хулине никĕсленĕренпе 550 çул çитнине хатĕрленсе социаллă ыйтусене татса пама, чăвашла кĕнекесем кăларма федераципе республика бюджетĕнчен нумай млн тенкĕ уйăрма пăхнă».

Республика Пуçлăхĕ вырăнти хăй тытăмлăх органне Тури Тушкилти телефон станцине ĕçлеттерсе яма, анализ валли юн илессине ялта йĕркелес ыйтăва тишкерме хушрĕ.

«Пĕтĕмĕшле илсен район кăтартăвĕсем çырлахтараççĕ, – пĕтĕмлетрĕ республика Пуçлăхĕ канашлăва. – Чăн та, вĕсенчен хăшĕ-пĕри начарланнă. Кăçал лайăхлатассишĕн çине тăрса ĕçлеме вăй-хал сунатăп».

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

# Канашсем аталану çулĕпе утаççĕ

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев виçĕм кун Канаш районĕнче ĕçлĕ çул çӳревре пулнă.***

Республика Пуçлăхĕ Канашри металл шăратакан завод строительствипе паллашнă, кунта кĕçех вакунсем валли оборудовани кăларма пуçлĕç. Андрей Гордиенко гендиректор палăртнă тăрăх – завод строительствине 230 млн тенкĕ ытла инвестици хывнă. Вăл хута кайнă май 120 ĕç вырăнĕ пулмалла, уйăхри вăтам ĕç укçи 20 пин тенкĕпе танлашмалла. Михаил Васильевич çакă пысăк пĕлтерĕшли, рынокра кирлĕ продукци кăларма пуçлани бизнесăн ăнăçлă аталанăвĕн никĕсĕ пуласси çинчен каланă.

Республика Пуçлăхĕ нумай функциллĕ центр ĕçне тĕрĕсленĕ. Канаш районĕнчи МФЦ – республикăри питĕ ăнăçлă ĕçлекен центрсенчен пĕри. Кашни оператор куллен 20-30 клиента йышăнать. Ĕçе «пĕр чӳрече» принциппа йĕркеленипе кунта килекенсем те кăмăллă – патшалăхăн тата муниципалитетсен пулăшу ĕçĕсемпе усă курнă чух вăхăт перекетленет.

Шăхасанти вăтам шкулта Чăваш Ен Пуçлăхĕ ертсе пынипе анлă канашлу иртнĕ, унта Канаш районĕн 2013 çулхи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пĕтĕмлетнĕ, кăçалхи тĕллевсене палăртнă. Канашлăва ЧР ял хуçалăх тата экономика аталанăвĕн министрĕсем Сергей Павловпа Владимир Аврелькин хутшăннă.

Сăмах илнĕ май Михаил Игнатьев интереслĕ идейăсемпе сĕнӳсем пама чĕнсе каланă, район экономикин аталанăвĕ кунта пурăнакан кашни çынран килнине палăртнă. Райадминистраци пуçлăхĕ Владислав Софронов экономикăн тĕп отраслĕсенчи кăтартусем ӳсĕмли çинчен каланă, çакăнта патшалăх пулăшăвĕ те курăмлă. Калăпăр, районăн ял хуçалăх организацийĕсене пĕлтĕр патшалăх енчен кӳнĕ пулăшу 84,3 млн тенке çитнĕ – 2012 çулхипе танлаштарсан 119%.

Иртнĕ çул уйрăм çынсем пурăнмалли 37,2 пин $м^2$ çурт-йĕр хута янă – виçĕм çулхипе шайлаштарсан 100,5% пулать. Çамрăк çемьесене, тăлăх ачасене, нумай ачаллă çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерес енĕпе мерăсем йышăннă. Канашлура коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлемелли парăмсемпе, управляющи компанисен ĕçĕпе, Канашри кайăк-кĕшĕк фабрикипе çыхăннă ыйтусене, ытти темăна сӳтсе явнă.

Ĕçре палăрнисене Михаил Игнатьев наградăсем панă. Вĕсен йышĕнче – Роза Шоркина хормейстер, Валентина Герасимова врач-педиатр, Константин Никонов преподаватель тата ыттисем. Çавăн пекех район çамрăкĕсене пуçарулăхпа пултарулăхри ăнтăлушăн стипендипе хавхалантарнине ĕнентерекен свидетельствăсем панă.

Калаçăва пĕтĕмлетнĕ май Чăваш Ен Пуçлăхĕ районта пурăнакансен мĕн пур асăрхаттарăвĕпе сĕнĕвне шута илессине палăртнă: «Эпир пурте пĕр ĕç тăватпăр – Раççей Президенчĕн пĕрлехи командинче халăхшăн ĕçлетпĕр. Чăваш Енре çирĕп çемьесем, сывă ачасем ытларах пулмалла. Çакă – пирĕн республика, çĕр-шыв пуласлăхĕн никĕсĕ. Пĕтĕмĕшле илсен Канаш районĕ кал-кал аталанать, кăтартусене лайăхлатас тĕллевпе малалла талпăнмалла. Çапла тумашкăн пирĕн пĕтĕм ресурс, хăватсем пур».

■ **К.АЛЕКСАНДРОВА**

# Шăмăршăсем демографие хăçан аванлатĕç?

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кăрлачăн 29-мĕшĕнче Патăрьел районĕнче пулнă хыççăн Шăмăршăна çул тытрĕ. Малтан район сыватмăшне çитсе курчĕ. Чирлисем сипленекен çурта юсаса ăшă тытăмне çĕнетнĕ хыççăн кунта халĕ хăтлă. Пациентсем йышăнăва электрон мелĕпе çырăнаççĕ. «Эпĕ те паян çак майпа усă куртăм. Тухтăрсем манăн кăмăла хăвăрт тивĕçтерчĕç», – терĕ Шăмăршăра пурăнакан 74 çулти Галина Никитина.

– Шел те, çĕнĕ йĕркене пурте хăнăхаймарăмăр-ха, ун пирки манса каясси те пулать, – терĕç хăйсен сывлăхне тĕрĕслеттерме килнисем. Вĕсем калани тĕрĕсех – çак çăмăллăхпа вунă çынран пĕри çеç усă курать.

Сывлăх сыхлавĕнче кадр ыйтăвĕн çивĕчлĕхĕ сисĕнет. 2013 çулхи кăтартусем сыватмăша тухтăрсемпе 72,9 процентпа тивĕçтернине çирĕплетеççĕ. «Земство тухтăрĕ» программăпа килĕшӳллĕн 2012-2013 çулсенче 4 çамрăк специалист çеç ĕçе вырнаçнă.

Çитменлĕх вĕренӳ тытăмĕнче те палăрать. Шкулсенче учительсен вăтам ӳсĕмĕ 48 çулпа танлашать. 35 çула çитменнисен йышĕ 5% /республикипе – 14,8%/ кăна. Çавăнпа та районта çамрăк специалистсене яла илĕртес тĕллевпе çине тăрсах ĕçлеççĕ – оклад çумне 100% чухлĕ хушса тӳлеме йышăннă.

Чĕрене чунтанах ыраттараканни вара – демографи лару-тăрăвĕ çивĕчленсех çитни. Михаил Игнатьев юлашки 2 çулта Чăваш Енре вăл лайăхланнине палăртрĕ. Республикăра пĕлтĕр кашни пин çын пуçне вăтамран 13,2 çын вилнĕ, ку тăрăхра – 20,7. Пĕлтĕр Шăмăршă районĕнче халăх йышĕ кашни 1000 çын пуçне вăтамран 5,8 çын /2012 çулта – пĕрре/ чакнă.

Михаил Васильевич хăй ЧР Патшалăх Канашне янă Çырăва аса илчĕ. Арçыннăн килтех пурăнмалла тенĕччĕ вăл. Шăмăршă тăрăхĕнчисем уйăхĕ-уйăхĕпе çĕр-шывăн пысăк хулисенче тар тăкаççĕ. Ăнланмалла: çемьене тулăх усрас килет. Çав вăхăтрах унăн тӳнтер енĕ пĕр кил-йыша та ырă кӳмест. Ачасем тивĕçлĕ воспитани илеймеççĕ. Ирĕке юлнă арăмĕсем мăшăрĕсене улталаççĕ, ĕçке ярăнаççĕ. Çавна пула çемье арканать.

Районта пĕлтĕр 121 мăшăр чăмăртаннă, 41-шĕ, кашни виççĕмĕшĕ уйрăлнă.

Çемье арканнин тепĕр сăлтавĕ – ача çуралайманни. Ку енче те кашни кĕтесре тенĕ пекех саккуна пăсса эрех, "фанфурик" /спиртпа эмел хутăшĕ/ сутаççĕ. Вĕсемпе хĕрсемпе каччăсем çамрăклах туслашаççĕ, ар çыхăнăвне кĕреççĕ. Пулас амăшĕ йывăр çын пулсан çуралас пепкерен хăтăлать те кайран ĕмĕрне те ача тытса кураймасть.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Валерий Фадеев районăн 2013 çулхи социаллă пурнăçĕпе тата экономика аталанăвĕпе, ку çулăн тĕллевĕсемпе паллаштарнă хыççăн ЧР сывлăх сыхлавĕн, экономика аталанăвĕн, пурлăх министрĕсем Алла Самойлова, Владимир Аврелькин, Светлана Енилина, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Олег Мешков, ыттисем доклада анлăн сӳтсе яврĕç. Шăпах çавăн чухне çуралчĕç те маларах хускатнă ыйтусем. Тĕпре – «Шăмăршăсем демографие хăçан лайăхлатĕç?» Михаил Игнатьев ку ыйту патне темиçе те таврăнчĕ.

Арçынсем «шапаша» çӳрени ăнсăртран мар. Вырăнта тупăшлă ĕç çук. Чылайăшĕн пуçарулăх çитмест. Чăваш Ен Пуçлăхĕ темиçе сехет маларах çеç Патăрьелте пулнă та Шăмăршăсене предпринимательлĕхе аталантарма кӳршĕсенчен вĕренме сĕнчĕ.

Зала пухăннисене нумай ыйту шухăшлаттарать. Хăшĕ-пĕри районăн ку чухнехи аталанăвне 20-30 çул каяллахипе танлаштарчĕ.

Демографи лару-тăрăвĕ çивĕчленнĕренех ял ватăлать. Тивĕçлĕ канăва тухнисем ĕçлеме пултаракан çынсен йышĕнче – çуррине яхăн.

Михаил Игнатьев Шăмăршă районĕнче çывăх çулсенче ырă улшăнусем пуласса шаннине палăртрĕ.

■ **В.ВАЛЕНТИНОВ**

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Индустри паркӗ пулӗ

? Чӑваш Енре индустри паркӗ уҫасси пирки тахҫанах каласҫӗ. Строительство ӗҫӗсем хӑҫан пуҫланасси паллӑ-и?

Н.ЕФРЕМОВ.
Вӑрнар районӗ.



Шупашкарта индустри паркне тума пуҫланӑ ӗнтӗ. Чӑнах та, строительство ӗҫӗсем чылай вӑхӑт вырӑнтан хускалаймарӗҫ. Ҫапах та пӑр тапранчӗ курӑнать. Объекта Промтрактор заводне хирӗҫ хута яма палӑртнӑ.

Пӗрремӗш тапхӑрта шыв пӑрӑхӗсене тата канализаци хываҫҫӗ. Унтан парка газ тата электричество илсе пырӗҫ. Республика влаҫӗ технопаркӑн инфратытӑмне хута ярассишӗн ҫеҫ яваплӑ. Ҫурт-йӗре предприятисем хӑйсем хӑпартӗҫ. Кашнин валли лаптӑк уйӑрнӑ.

Индустри паркне вунна пайланӑ. Ҫичӗ компани килӗшӗве алӑ пусма хатӗррине, виҫҫӗшӗ аукцион ирттерме палӑртнине пӗлтерет ЧР Экономика аталанӑвӗн министерстви. Предприятисен индустри паркӗн территорийӗнче строительство ӗҫӗсене хӑҫан пуҫӑнмалли те паллӑ. 2015 ҫулхи пуш уйӑхӗччен ҫурт-йӗр никӗсне ярса ӗҫе пикенмелле. Ҫак вӑхӑта пӑхӑнманнисен килӗшӗвӗсене пӑрахӑҫлаҫҫӗ.

## Музей хупӑннӑ

? Чул хулари Атӑлҫи халӑхӗсен архитектура тата йӑла-йӗрке музейне мӗншӗн хупнӑ?

Р.ГЕРМАНОВА.
Канаш районӗ.



Чул хула влаҫне музей кивелсе юхӑнни пӑшӑрхантарать. Хальхи вӑхӑтра уҫӑ тӳпе айӗнчи музей ҫынсене йышӑнмасть, мӗншӗн тесен 13-мӗш тата 14-мӗш объектсем япӑхнӑ, вӗсем экскурсантсен пурнӑҫӗшӗн питӗ хӑрушлӑх кӑларса тӑратаҫҫӗ.

Атӑлҫи халӑхӗсен архитектура тата йӑла-йӗрке музейне 1973 ҫулта уҫнӑ. Унта XVII – XIX ӗмӗрсенчи ял архитектурин объекчӗсене – пӳрт, ампар, кӗлет, арман, чиркӳсем – вырнаҫтарнӑ. Пӳрт ӑшчиккине хресчен пурнӑҫӗнчи япаласемпе илемлетнӗ.

Пӗлтӗр музей бюджечӗ 4 миллион тенкӗпе танлашнӑ. Чул хула администрацийӗн пуҫлӑхӗ О.Кондрашов каланӑ тӑрӑх – ҫак укҫа коммуналлӑ пулӑшу ӗҫӗсемшӗн тӳлеме тата ӗҫченсене шалу пама ҫеҫ ҫитнӗ. Влаҫ тата халӑх шухӑшӗпе – "музей хулана кирлӗ". 2014 ҫулта 10 миллион тенкӗ уйӑрма палӑртнӑ. Ҫак укҫа музейӑн пысӑках мар объекчӗсене юсама ҫитмелле.

Администраци наци диаспорисем пулӑшасса шанать. Музей ятӗнче "Атӑлҫи халӑхӗсен" сӑмахсем пур пулин те кунта вырӑссен архитектурипе /ӑна 1970 ҫулсенче Чул хула облаҫӗн ҫурҫӗр пайӗнчен куҫарса килнӗ/ ҫеҫ паллашма пулать. Чул хула облаҫӗнче пурӑнакан тӗп халӑхсен – чӑвашсен, тутарсен, мордвасен, марисен – экспоначӗсем хальлӗхе музейра ҫук-ха.

Палӑртса хӑварар: Вӑтам ӗмӗрсенче Чул хула таврашӗнчи Атӑл хӗрринчи мордва йӑхӗсем пурӑннӑ вырӑнсем Атӑлҫи Пӑлхар витӗмне лекнӗ. Лаврентьев ҫул ҫыравӗ Чул хулана 1221 ҫулта "авалтан пӑлхарсен хули вырнаҫнӑ вырӑнта" никӗсленине кӑтартать. Алексей Савельев паллӑ археолог шухӑшӗпе – пӑлхарсем ку крепоҫпа ҫурҫӗрти форпост вырӑнне усӑ курнӑ.

## Ҫухалнӑ ӑру

? "Ҫухалнӑ ӑру" шутне камсене кӗртеҫҫӗ? Ҫак калараш ӑҫтан пулса кайнӑ?

Н.ТИМОФЕЕВ.
Канаш районӗ.



Ҫак калараш пирӗн пата Эрнест Хемингуэй произведенийӗсенчен килнӗ. Хемингуэй шухӑшӗпе – "ҫухалнӑ ӑру" йышне шкул пӗтеричченех вӑрҫа кайнӑ, пурнӑҫра хӑйсен вырӑнне тупма ӗлкӗриччен ҫын вӗлерме пуҫланӑ ҫамрӑксем кӗреҫҫӗ. Фронтран чунӗсене амантса, кӗлеткисене суранлатса таврӑннӑскерсем чылай чухне мирлӗ пурнӑҫа хӑнӑхса ҫитеймесӗр ухмаха тухнӑ е хӑйсем ҫине алӑ хунӑ.

Ҫавӑн пекех литература юхӑмне "Ҫухалнӑ ӑру" ят панӑ. Вӑл Джеймс Джойс, Эрих Мария Ремарк, Анри Барбюс, Фрэнсис Скотт Фицджеральд тата ытти паллӑ ҫыравҫа пӗрлештернӗ.

Термин авторӗ Гертруда Стайн тесе шухӑшлаҫҫӗ. Кун пирки Хемингуэй "Праздник, который всегда с тобой" хайлавӗнче ҫапла ҫырать: "Канадӑран таврӑнсан Нотр-Дам-де-Шан урамӗнчи ҫурта пурӑнма вырнаҫрӑмӑр. Стайн миссла эпир ун чухне питӗ туслӑччӗ. Шӑпах ҫав вӑхӑтра вӑл ҫухалнӑ ӑру пирки сӑмах пуҫарчӗ.

Ҫав ҫулсенче Стайн мисс кивӗ "Фордпа" ҫӳретчӗ. Пӗррехинче машинипе темскер пулнӑ. Анчах ҫамрӑк механик, вӑрҫӑн юлашки ҫулӗсенче фронтра пулнӑскер, халӗ гаражра ӗҫлекенскер, ӑна юсайман е "Форда" черетсӗр йышӑнас темен. Стайн мисс кун пирки гараж хуҫине пӗлтерсен хайхискере хытах лекнӗ. Хуҫа: "Эсир пурте – generation perdue!" – тенӗ. "Вӑт камсем эсир! Эсир пурте пӗрешкел! – тенӗ Стайн мисс. – Вӑрҫӑра пулнӑ мӗн пур ҫамрӑк. Эсир – ҫухалнӑ ӑру".

"Ҫухалнӑ ӑру" идейисемпе проблемисене малтан битниксен, каярахпа хипписен юхӑмӗсем йышӑннӑ. Хальхи вӑхӑтра ҫак каларӑшпа унӑн малтанхи пӗлтерӗшне тата историне шута илмесӗр пур ҫӗрте те усӑ кураҫҫӗ.

## Пӗр хуплашка айӗнче

? Агата Кристин мӗн пур хайлавне пӗр хуплашка айӗнче кӑларнӑ теҫҫӗ. Манӑн шухӑшӑмпа – вӑл пӗчӗкех пулас ҫук. Кун пек япалана алла тытса вулама та меллӗ мар ӗнтӗ...

А.АНТОНОВА.
Ҫӗмӗрле районӗ.

Агата Кристин Марпл мисс пирки ҫырнӑ хайлавӗсен тулли пуххине пӗр хуплашка айне вырнаҫтарса Лондонра кун ҫути кӑтартнӑ. Ҫак пулӑма халӑх тӗрлӗрен йышӑннӑ. Пӗрисене килӗшнӗ, теприсене вӗчӗрхентернӗ, виҫҫӗмӗшсене тарӑхтарнӑ...

Томӑн калӑпӑшӗ питӗ тӗлӗнтерет: 32 сантиметрлӑ корешок айне 4000 ытла страница вырнаҫнӑ. Издательство ӗҫӗн ҫимӗҫӗ сакӑр килограмм ытла таять. Пӗтӗмпе 500 экземпляр пичетлесе кӑларнӑ. Кашнине 1000 фунт стерлингпа сутнӑ.

Ҫакӑн хулӑнӑш кӗнекене алла тытса вулама меллӗ пулас ҫукки каламасӑрах паллӑ ӗнтӗ. Анчах Агата Кристи пултарулӑхне хисеплекенсем ӑна килти вулавӑшӗнчи ҫӳлӗк ҫинче курма ӗмӗтленни иккӗлентермест.



## Нацисен пӗрлӗхне ҫирӗплетӗҫ

? Чӑваш Ен "Раҫҫей нацийӗсен пӗрлӗхне вӑйлатакан" программӑна лекнине илтрӗм. Мӗнле майпа пурнӑҫлӗ вӑл ҫак ӗҫхӗле?

В.ОСИПОВ.
Тӑвай районӗ.



Раҫҫей Федерацийӗн Регионсен аталанӑвӗн министерстви "нацисен пӗрлӗхне вӑйлатакан" программӑсене пурнӑҫлама укҫа-тенкӗ илес текен регионсен ыйтӑвӗсене пӑхса тухнӑ, 20-шне суйласа илнӗ.

Ведомство малтисен шутӗнче ырласа йышӑннӑ регионсен хушшинче Чӑваш Ен те пур. Ҫавӑн пекех Бурятире, Ингушетире, Карелире, Мордва Республикинче, Якутире, Кабарда-Балкарта, Краснодар, Красноярск, Пермь крайӗсенче, Ленинград, Архангельск, Белгород, Воронеж, Киров, Мурманск, Эрӗнпур облаҫӗсенче, Хант-Манси, Чукотка автономи округӗсенче Раҫҫейри нацисен пӗрлӗхне вӑйлатасшӑн.

РФ Регионсен аталанӑвӗн министерствине пурӗ 61 субъект заявка панӑ. 13 регион программӑна хутшӑнма килӗшмен.

Раҫҫей нацийӗсен пӗрлӗхне вӑйлатмалли мерӑсен шутӗнче экстремизмпа тата ксенофобипе кӗрешессине, мигрантсен интеграцине, хӑш-пӗр регионта казаксене тата сахал йышлӑ тӗп халӑха тӗрев парассине палӑртаҫҫӗ.

## Ӗмӗрхи хула Рим

? Рим пирки ӗмӗрхи хула тенине илтнӗ. Унран аслӑраххи урӑх ҫук-им? Ҫак хула пирки ытларах пӗлес килет...

Л.РОМАНОВА.
Хӗрлӗ Чутай районӗ.



Римӑн пуян историйӗ виҫӗ пин ҫула яхӑнах тӑсӑлать. Ӑна пирӗн эрӑччен 625 ҫулсенче никӗсленӗ тесе шухӑшлаҫҫӗ. Ҫапах та планета ҫинчи чи ватӑ хула хальхи вӑхӑтри Ливан территорийӗнче вырнаҫнӑ Библос шутланать. Ун пирки асӑннисем пирӗн эрӑччен 5 пин ҫул малтан тӗл пулаҫҫӗ.

Лингвистсен шухӑшӗпе – Рим сӑмах этрусксен чӗлхинчен кӗнӗ. Вӑл "вӑй" е "юхан шыв" пӗлтерӗшлӗ. Ҫавӑн пекех вӑл "ҫилӗ" сӑмахпа пӗр тымартан пулни курӑнать. Ромул тата Рем йӗкӗрешсене тӑрантарнӑ кашкӑр ҫиллипе ҫыхӑнтарма пулать.

Малтанхи тапхӑрта Римра хӗрарӑм сахал пулнӑ. Ромул ҫыннисем /пирӗн эрӑччен 771-717 ҫулсем/ кӳршӗри сабин йӑхӗсен хӗрӗсене вӑрласа килнӗ. Чылайӑшне вӑрӑсене парне вырӑнне панӑ. Чи хитрисене хӑватлӑ сенаторсем суйласа илнӗ.

Рим – хӑйӗн территорийӗнче суверенлӑ патшалӑха вырӑн панӑ пӗртен пӗр хула. Ку тӗнчери чи пӗчӗк патшалӑх пек палӑрнӑ Ватикан. Рим тухтӑрӗсем темӗн тӗрлӗ медицина инструменчӗпе усӑ курнӑ. Вӗсен катетерсемпе тӗкӗрсем те пулнӑ. Хальхи чылай медицина терминӗ латин чӗлхинчен кӗнӗ.

Тӗнчери пӗрремӗш суту-илӳ центрне Римра Траян император туса лартнӑ. Вӑл темиҫе хутлӑ, 150 ытла суту-илӳ вырӑнӗллӗ пулнӑ. Унта апат-ҫимӗҫрен пуҫласа тумтир таранах сутнӑ. Рим искусствинче ҫӗлен ахаль сӑнар ҫеҫ. Ылтӑн ерешсем ҫине ӳкернӗ ҫӗлен ҫемьене юрату тата ырлӑх кӳнине ӗненнӗ.

Колизея уҫнӑ кун унӑн арени ҫинче пилӗк пин чӗр чуна вӗлернӗ. Ҫак объект сцени ҫинче пӗтӗмпе 500 пин ытла ҫынна, пӗр миллиона яхӑн чӗр чуна тӗп тунӑ. Пирӗн эрӑри IV ӗмӗр вӗҫӗ тӗлне Рим империйӗнче 53 пин ытла миль ҫул хывнӑ. Пӗр миль вӑтамран 1450 метрпа танлашнӑ. Кашни миль хыҫҫӑн чул паллӑ лартса хӑварнӑ.

Авалхи Рим халӑхӗ тӗшмӗшлӗхе хытӑ ӗненнӗ. Чан сасси ача ҫуратакан хӗрарӑмӑн ыратӑвне ҫӑмӑллатать, цикламен шӑршлани кушкалланасран сыхлать, тӑмана курни ырра пулас ҫук тесе шухӑшланӑ. Сӑпсасем вара ӑнӑҫу кӳнине шаннӑ.

Малтанхи вӑхӑтра улттӑмӗш тенӗ август /ҫурла/ уйӑхне Рим императорӗн Августӑн ятне панӑ. Январь /кӑрлач/ Янус турӑ ячӗпе хисепленет. Ҫак турӑ икӗ питлӗ пулнӑ. Пӗри каялла /иртнӗ ҫул еннелле/, тепри умнелле /малашлӑха/ пӑхнӑ.

**Кӑларӑма Валентина БАГАДЕРОВА хатӗрленӗ.**




# Çăмăллăх укçа-тенкĕпе çыхăннă

***Федераци Канашĕн Социаллă политика комитечĕн председателĕ, «Раççей пенсионерĕсен союзĕн» ертÿçи Валерий Рязанский РФ ветерансен общество организацийĕсен представителĕсемпе тĕл пулни тата журналистсем валли йĕркеленĕ брифинга хутшăнни, общество организацийĕсен представителĕсемпе массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсен ыйтăвĕсене – «вăрçă ачисене» çăмăллăхпа тивĕçтерес, регионта «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ят парас, ял пенсионерĕсене, нумай ачаллă çемьесене хÿтĕлес тата ыттине – хуравлани пирки хаçатра пĕлтернĕччĕ. Паянхи кăларăмра çакăнпа тĕплĕнрех паллаштаратпăр.***



## Регион тупăшне кура

**«Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ят парас енĕпе кашни регион хăйĕн нормативлă актне йышăннă. Унпа стажа тĕпе хурса чысласси те çав шута кĕрет. Пирĕн республикăра çакна тивĕçмешкĕн унăн тăсăмĕ хĕрарăмсен – 40, арçынсен 45 çултан кая мар пулмалла. Федерацин «Ветерансем çинчен» саккунĕпе килĕшÿллĕн вара «Ĕç ветеранĕ» ята патшалăх наградисем пуррисене кăна параççĕ. Асăннă саккуна стажпа çыхăнтарса улшăну кĕртме палăртман-и? Уйрăммăн илсен унăн тăсăмне 35 /хĕрарăмсемшĕн/ тата 40 /арçынсемшĕн/ çула хăварас тĕлĕшпе.**

**Тамара КОСОЛАПОВА.**
Улатăр районĕ.

«Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçес ыйту чылайăшне хумхантарать. Халĕ асăннă хисеппе республикăн патшалăх наградисене илнине кура кăна мар, Чăваш Ен Президенчĕн Указĕпе килĕшÿллĕн стажа тĕпе хурса та чысласçĕ: хĕрарăмсен ку кăтарту – 40, арçынсен 45 çулпа танлашмалла. Шел те, асăннă виçене кармашайман ентешсем те сахал мар. Хăшпĕр регионти пек 35 /хĕрарăмсем/ тата 40 çул /арçынсем/ стаж пухнисем тĕлĕшпе тивĕçлĕ йышăну тутарасшăн.

Раççей Федерацийĕн Федераци Канашĕн Социаллă политика комитечĕн председателĕпе тĕл пулнă самантпа усă курса общество организацийĕсен представителĕсем асăннă ыйтăва Валерий Рязанский татăклăн хуравласса кĕтрĕç. Вĕсен шухăшĕпе – ку енĕпе федерацин пĕрлĕхлĕ нормисене çирĕплетни вырăнлă пулмалла.

Федерацин «Ветерансем çинчен» саккунĕпе килĕшÿллĕн Раççей субъекчĕсене ĕç ветеранĕн ячĕпе чыслас тĕлĕшпе хăйсен условийĕсене палăртма ирĕк панă. Çавна май ĕçре палăрнисене тĕрлĕрен сумлаççĕ, социаллă пулăшу мерисем те уйрăлса тăраççĕ.

Валерий Рязанский регионсен ветеранĕсене палăртмалли майсем анлăланса пынине ырларĕ, мĕншĕн тесен кама хÿтĕлесси-пулăшассине уçăмлатмашкăн вырăнта ансатрах, тава тивĕçлĕ ĕçчен, хисеплĕ гражданин ячĕсене парассине, ятарлă пенсипе тивĕçтерессине вĕсен палăртмалла. Ку енĕпе федерацин пĕрлехи нормисене çирĕплетме май çук, мĕншĕн тесен çакă укçа-тенкĕпе çыхăннă.

Мускав хăнин шухăшĕпе – ĕç ветеранĕн ятне стажа кура панипе те килĕшме çук. Çын ăна 45 çул пухнă тейĕпĕр. Çак хушăра вăл эрнере 2 кунне ĕçре ирттернĕ, виççĕшне – пулăра. Валерий Владимирович палăртнă тăрăх – кам мĕн чухлĕ ĕçленипе пĕрлех вăл муниципалитет, регион, общество пурнăçне хывнă тÿпене уйрăммăн хакламалла. «Пысăк стажа кура кăна ĕç ветеранĕн ятне пани тĕрĕсех мар пек туйăнать. Тен, ытти пахалăха та тĕпе хумалла? Вырăнти наградăсем, ведомство паллисем пур вĕт. Вĕсемпе чыслани çын хăйĕншĕн ĕçленине /хăйне, çемйине тăрантарассишĕн, кăмăлне тивĕçтерессишĕн, ăсталăхне ÿстерессишĕн/ кăна мар, регион ырлăхĕшĕн те тăрăшнине кăтартса парать», – терĕ.

Пирĕн хутлăхра «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята 40 /хĕрарăмсем/ тата 45 /арçынсем/ çул стаж пухнисене пама май тупнине вăл ырларĕ. 35 тата 40 çул ырми-канми ĕçленисен кăмăлне те тивĕçтерме пулать паллах. Кун пек чухне вара республика бюджечĕн çуллен 440 млн тенкĕ тăкаклама тивет. Çавăнпа асăннă ыйтăва татса памашкăн хальлĕхе май çук – экономика аталану çулĕпе пĕр тикĕс пырасса, хыснана нухратпа кирлĕ чухлĕ пуянлатасса кĕтме тивет.

## «Вăрçă ачисем» хÿтĕлессе кĕтеççĕ

**Çĕр-шыв йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕ тапхăрта Çĕнтерĕве çывхартмашкăн «вăрçă ачисем» те хăйсен тÿпине хывнă, çул çитменнине пăхмасăр фронта пулăшас тĕллевпе производствăра вăй питтисемпе танах ĕçленĕ. Вĕсене Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин тапхăрĕнчи тыл ĕçченĕсемпе танлаштарма палăртмаççĕ-и?**

**Татьяна СТЕПАНОВА.**
Канаш районĕ.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсенче çут тĕнчене килнисем ку ыйтăва пĕрре кăна мар çĕкленĕ, малашне те хускатĕç.

Çакăн пирки Валерий Рязанский урăхларах шухăшлать. Чăн та йывăр вăхăтра ÿснĕскерсен ачалăхĕ нушара иртни пирки иккĕленÿ çук. Анчах çакна асра тытмалла: пĕрисем Курск, Смоленск, Харьков тăрăхĕсенче – хаяр çапăçусем кĕрленĕ е тăшман авиацийĕ тăтăшах тапăнса бомба сирпĕтнĕ вырăнсенче – пурăннă, теприсем тылра – Новосибирскра, Ташкентра е Инçет Хĕвел тухăçĕнче. Вĕсене те çăмăл пулман паллах, çапах условийĕсем пĕрешкел мар.

Тĕрĕссипе, «вăрçă ачисене» хÿтĕлес тĕлĕшпе çăмăллăх пĕр хут палăртнă: ятарлă йышăнупа патшалăх компенсацине 18 çул тултариччен, урăхла каласан çитĕнсе çитиччен, тивĕçекенсен йышне Финн вăрçинче пуç хунисен ачисене малтан кĕртнĕ, каярахпа – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче вилнисен ывăл-хĕрне. 1961 çулта çакна пăрахăçланă.

Валерий Владимирович палăртнă тăрăх – халĕ «вăрçă ачисене» иккĕмĕш хут пулăшасси пирки ыйту çĕклеççĕ. Унашкаллисем Раççейре 16 млн çын.

Асăннă ушкăнри граждансене регионсем хăйсен хÿттине илни вырăнлăрах. Хальлĕхе Раççейĕн 16 субъекчĕн саккунĕсемпе килĕшÿллĕн вĕсен тĕлĕшпе çăмăллăх палăртнă. Тула, Пермь тăрăхĕсенче 1945 çулхи авăн уйăхĕн 3-мĕшĕччен çуралнисенчен хăр тăлăх юлнисене кăна пулăшаççĕ. Вологда тăрăхĕнче вĕсене регионăн ĕç ветеранĕсемпе танлаштарнă. Тверь облаçĕнче хула тата хуласен хушшинчи транспортпа çÿремешкĕн, медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерес енĕпе хушма çăмăллăх панă. Чылай çĕрте музейсене, культура мероприятийĕсене тÿлевсĕр çÿреме ирĕк пур тата ытти те.

Валерий Рязанский шухăшĕпе – Патшалăх Думине пăхса тухмашкăн тăратнă вунă саккун проектĕнчен тăлăхсене пырса тивекеннине кăна ырлани тĕрĕс пулассăн тата чăнлăхпа килĕшсе тăрассăн туйăнать.

## Ялта пурăнакансен пенсине ÿстерĕç

**Çĕнĕ саккунсемпе килĕшÿллĕн пенси виçине коэффициентсене хушса палăртмалла. Унăн виçи вара ĕç укçипе тÿрремĕнех çыхăннă. Ялта пурăнакансен шалăвĕ пĕчĕккине пурте пĕлеççĕ. Сĕнтĕрвăрри йышши пĕчĕк хуласенче те унăн виçипе мухтанмалли çук. Çавна май пенси те сахал тухать. Кун йышши сăлтавсене çĕнĕ саккунра шута илеççĕ-и?**

**Роза РАКОВА.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

«Ял халăхĕн шалăвĕ пĕчĕккипе пенси виçи ĕç укçин 40 процентне çитесси пирки калаçма иртерех. Çавна май çĕнĕ саккунпа килĕшÿллĕн çĕр ĕçченĕсен пенсийĕн база пайне 2016 çулта 25 процент ÿстерме йышăннă. Ял хуçалăхĕнче пĕр-пĕр специальноçпа /вĕсен переченьне çывăх вăхăтрах çирĕплетмелле/ 30 çул ĕçленĕ тĕк пенсие тухнă чухне хушма тÿлеве тивĕçетĕн – малтанласа палăртнă тăрăх 1 пин тенкĕ ытларах илме пуçлатăн.

Шалăва илес тĕк ăна шутласа панине, тÿленине тĕрĕслесе тăратпăр. Бюджет тытăмĕнче тăрăшакансен вăл яланах пĕчĕк пулнă. Чăн та, Раççей Президенчĕн указĕпе ăна халĕ çуллен ÿстерсе пыраççĕ. Вĕрентекенсем, сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсем ытларах илме пуçлани савăнтарать, – пĕлтерчĕ Валерий Рязанский. – Нумаях пулмасть Курск облаçĕнчи ФАПсенчен пĕринче пулма тÿр килчĕ. Фельдшера уйăхсерен – 17 пин, унăн пулăшуçине 15 пин тенкĕ тÿлеççĕ. Чăн та, медицинăн кĕçĕн персоналĕн шалăвĕ хальлĕхе çав-çавах пĕчĕк. Социаллă ĕçченсемпе культурăра тăрăшакансен те пысăках мар. Ĕç укçине ÿстерес енĕпе малаллах ăнтăлатпăр».

## Ытти майпа та хавхалантармалла

**5 ача çуратса ÿстернĕ хĕрарăмсем ватлăхри ĕç пенсине маларах тухмалли ирĕкпе усă кураççĕ. 3–4 ачаллисен кунашкал çăмăллăх çук. Валерий Владимирович, вĕсене тивĕçлĕ канăва çирĕплетнĕ ÿсĕмрен иртерех кăларма палăртмаççĕ-и?**

**Галина ИВАНОВА.**
Çĕнĕ Шупашкар хули.

Парламентарисем çакнашкал çулпа кайнă: 4 ача çуратнă хĕрарăмсен пенси стажĕнче 6 çул шута илнĕ /кашнине 1,5 çул пăхнăшăн/. Тивĕçлĕ канăва каймашкăн кирлĕ чи пĕчĕк виçе 15 çулпа танлашмалла чухне тепĕр 9 çулне пухассишĕн хĕрарăм хăй çине тăрассăн туйăнать, мĕншĕн тесен хальхи пурнăç таппинчен никам та юласшăн мар.

«Тивĕçлĕ канăва каймалли ÿсĕме улăштарассине илес тĕк ку енĕпе правительствăна ÿкĕте кĕртме пултараймарăмăр. Пенсин халĕчченхи саккунĕсемпе палăртнă правăсем сыхланса юлаççĕ», – терĕ Федераци Канашĕн Социаллă политика комитечĕн ертÿçи пенси тытăмне кĕмелли коэффициентсене шайлашуллăн ÿстерсе 23,4-на çитерни нумай ачаллă амăшĕсен пулас пенсийĕ валли хывнă сумлă тÿпе пулнине палăртса. – Унсăр пуçне çемьене хÿтĕлесе федерацин 28-мĕш статйине улшăну кĕртрĕмĕр – нумай ачаллисене тÿлевсĕр тата аукциона хутшăнтармасăр çĕр лаптăкне тивĕçмелли право патăмăр».

Федерацин тепĕр саккунне те улшăну кĕртме хатĕрленеççĕ, унпа килĕшÿллĕн субъектсен муниципалитет органĕсене çак çăмăллăх ирĕкне социаллă пулăшăвăн ытти мелĕпе /тĕслĕхрен, Шупашкарта пурăнакансене çĕрпе тивĕçтерме май килмесен – хваттер валли субсиди е ипотека кредичĕ/ улăштарма ирĕк парĕç. Кун пек чухне малтан йышлă çемьепе килĕшсе татăлмалла паллах.

Ачаллă ашшĕ-амăшне патшалăх хÿтĕлет, малашне те пулăшсах тăрĕ. Пирĕн обществăшăн кашни çемьере сахалтан та 3 ача çитĕнни пĕлтерĕшлĕ, паянхи куншăн иккĕ сахал.

«Чăваш Республикинче ача çураласси ÿссе пынине ырлатпăр. Çапла пулмалла та. Раççее илес тĕк «вырăс хĕресĕ» урлă эпир икĕ хутчен каçрăмăр: малтан – 1991 çулта, пурнăçран уйрăлнисен кăтартăвĕ çÿлелле кармашрĕ, çут тĕнчене килнисен – аялалла; унтан – 2013 çулта, çуралнисен йышĕ вилнисенчен иртсе кайрĕ. Çак çитĕнĕве çирĕплетсе хăвармалла. Анчах та пенси саккунĕсемпе нумай ачаллисене хавхалантарса пынипе кăна çапла тума май килмĕ. Хÿтлĕхĕн тĕрлĕ мелĕпе анлăн усă курмалла. Сăмахран, çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе, налук хурассипе, сывлăха сыхлассипе тата ытти енпе.

■ **Валентина СМИРНОВА**

• ➡ 6, 11, 12 стр.

Хӳтлӗх

*Çын тата вăхăт*

# Ĕмĕр сакки сарлака



● *Анатолий Трофимовичăн амăшĕ Ксения Егоровна – чи хакли.*

***Хулари хăтлă хваттерте пурăнать вăл. Пурте пур темелле: сĕтел тулли шăл çемми апат, пӳлĕмре ăшă – ватă çыншăн çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Кил-тĕрĕшри ĕçпе те аппаланмалла мар – пăрчăкан пек кинĕ тирпей-илем кĕртме, апат хатĕрлеме тем самантра ĕлкĕрет, хунямăшĕ çакна сиссе те юлаймасть. Ывăлĕ те амăшĕн ватлăхне телейлĕ тăвассишĕн хыпса çунать. «Анне, ларса кан. Мĕн çиес килет, кала – лавккана çийĕнчех кайса килетĕп», – тесе кăна тăрать.***

***Çапах та Ксени аппана тем çитмен пек туйăнать. Ялта çуралса ӳснĕскерĕн, кунçулне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнăскерĕн чунĕ тăван еннех туртăнать. Пускилсемпе, тантăшĕсемпе курса калаçассăн туйăнать. Тĕрĕссипе, унăн ӳсĕмĕнчисем леш тĕнчере канлĕх тупнăранпа вăхăт самаях иртнĕ ĕнтĕ. Ăна турă ыр кăмăллăхне, ăш пиллĕхне, ĕçченлĕхне кура-тăр вăрăм кун-çул парнеленĕ: нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕнче кинемей 102 çул тултарать. Çавна май тăван ене те тухсах çӳреймест, ывăлĕпе кинĕн хӳттинчех хăйне хăтлă туять. Çамрăклăхри юрăсене хушăран аса илсе йăпанать. Унăн шухăшĕпе – юрă чуна канăçлăх кӳрет, кăмăла çĕклет. Хăйĕн те сасси уçă пулнă. Ираида Вдовина, Зоя Селиванова, Анна Казакова, Мефодий Денисов, Иван Христофоров юррисене уйрăмах кăмăллать.***

### Кун-çулĕ çăмăл пулман

Ксения Егоровна Егорова Вăрмар районĕнчи Çитмĕш ялĕнче йышлă çемьере çуралнă, пилĕк ывăлпа виçĕ хĕр ӳснĕ. Ашшĕ-амăшĕ пурне те виçĕ-тăватă класс таран вĕрентме пултарнă тата пĕчĕкренпех ĕç тĕлне вĕрентсе çитĕнтернĕ.

Вун сакăр çул тултарсан Сĕнтĕр ялĕнчи Павел Никитина качча тухнă. Виçĕ ача парнеленĕ вăл мăшăрне. Шел, вăталăххи йывăр чире пула çамрăклах çĕре кĕнĕ. Хĕрĕ те пирĕн хушăра çук ĕнтĕ. 1937 çулта çут тĕнчене килнĕ Николай халĕ çемйипе Вăрмар районĕнче пурăнать.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан ялти вăй питти арçынсемпе пĕрле упăшки те салтак шинелĕ тăхăннă, ирсĕр тăшманпа çапăçма тухса кайнă. Ачисем пĕри тепринчен пĕчĕккине пăхмасăр Ксения Егоровна тăван колхозра ĕçленĕ, фронта çăкăр-тăварпа, аш-пăшпа тивĕçтерессишĕн, Çĕнтерĕве çывхартассишĕн тăрăшнă, çав вăхăтрах килти хуçалăха та юхăнтарман.

Вăрçăран Павăла кĕтсе илеймен арăмĕпе ачисем: кил хуçи çапăçу хирĕнче пуç хунă.

Салтак арăмне пурнăçа тытса пымашкăн çăмăл пулман паллах. 1946 çулта вăл иккĕмĕш хут çемье çавăрнă – фронтран таврăннă Трофим Семеновпа пĕрлешнĕ. Виçĕ ывăл çуратнă вĕсем. Аслин кун-çулĕ кĕске пулнă, çуралсанах çут тĕнчерен кайнă. Анатолийпе Юрий вара – ватă амăшĕн тĕрекĕ, шанăçĕ...

Тивĕçлĕ канăва тухиччен «Россия» /каярахпа – «Мир»/ совхозра вăй хунă вăл, ăста хăмлаçă шутланнă. Ачисене те ĕçе хăнăхтарса ӳстернĕ. Хастарлăхшăн Хисеп хутне, тав сăмахне пĕрре кăна мар тивĕçнĕ, патшалăх ăна «Тăван çĕр-шывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» медальпе чысланă. Ксения Егоровна – ĕç ветеранĕ тата тыл ĕçченĕ.

### Ывăлĕсем – амăшĕн тĕрекĕ

1990 çулта Трофим Семенович çут тĕнчерен уйрăлнă хыççăн ялти кил-çурта тытса тăмашкăн ватă çынна кансĕр тесе Шупашкарта пурăнакан ывăлĕ Анатолий амăшне хăйĕн çемйине илсе килнĕ. Чăн та, Ксени аппана Сĕнтĕрти кĕçĕн ывăлĕн çемйи те хăй хӳттине илсе усрама пултарнă-ха. Çапах та пĕр тăвансем канашланă хыççăн çывăх çыннине хуланах куçарма шухăшланă – амăшне унта лайăхрах пуласси-не пурте аван ăнланнă, мĕншĕн тесен пурнăç условийĕсем ялтинчен чылай хăтлăрах, сыватмăш та çывăхрах, медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерекен те килтех пулнă /Анатолий мăшăрĕ пурнăçне сывлăх сыхлавĕпе çыхăнтарнă/.

«Кинĕпе, ман арăмпа ĕнтĕ, килĕштерсе пурăнаççĕ вĕсем, пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланаççĕ: çамрăкки хунямăшне ватлăх кунĕсенче телей кӳме тăрăшать, асли кĕçĕннине сĕнӳ-канашпа пулăшать, кун-çула тытса пымашкăн вĕрентет. Вĕсен çураçулăхне, килĕшӳлĕхне курса чунăм савăнать. Анне ăш пиллĕхне, чун ăшшине Сĕнтĕрте тĕпленнĕ пиччепе шăллăмăн Николайпа Юрий çемйисемшĕн те, пирĕншĕн те хĕрхенмест. Тавах юратнă çыннăмăра пире çуратнăшăн, юратнăшăн тата халăха юрăхлă çитĕнтернĕшĕн. Унпа эпир мăнаçланатпăр, тĕслĕхĕпе хĕмленсе малалла талпăнатпăр, – тет Анатолий Трофимович.– Тăпăл-тăпăл çӳренĕ чухне мăнукне Ольăна ача садне ăсататчĕ, илсе килетчĕ. Юрла-юрла ӳстерчĕ вĕт. Халĕ Ольга хăй те çемьеллĕ, асламăшĕ хавхалантарса тăнине ăша хыврĕ ахăр, пултарулăх çулне суйласа илчĕ, вăл – балетмейстер».

Пĕр тăвансем туслă пурăнаççĕ, ал ĕçне ăста пулнă май пĕр-пĕрне пулăшма яланах хатĕр. Ялта тĕпленнĕ Николайпа Юрий çирĕп хуçалăх çавăрнă, йышлă ача-пăча çуратса ӳстернĕ.

Анатолий Канашри педагогика училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн кун-çулне спортпа çыхăнтарнă: Куславккари, Шупашкарти шкулсенче – физкультура, Олимп резервĕсен училищинче гимнастика вĕрентнĕ. Анатолий Трофимовича кире пуканĕ çĕклессипе 1976-1979 çулсенче республика тата Шупашкар хулин чемпионĕн ятне çĕнсе илнĕ. 2008-2009 çулсенче вăл Мускав районĕн социаллă пулăшу центрĕнче ĕçленĕ, аслă ăру çыннисен, сусăрсен сывлăхне тĕреклетес, пурнăçне çăмăллатас енĕпе сахал мар тăрăшнă. Халĕ, авă, амăшĕн ĕмĕрне малалла тăсассишĕн хăйĕнчен килнине йăлтах тăвать. Ахальтен мар ĕнтĕ Ксени аппа час-часах: «Ывăлăмпа кинĕм маншăн ылтăнран та пахарах. Лайăх пăхса усраççĕ. Ĕмĕрĕме ачасен хӳттинче ирттерме пӳрнишĕн чăннипех савăнатăп», – тет.

■ **Валентина ИЛЬИНА.**

Шупашкар хули.

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

# Пенси виçи ӳснĕ

***РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – кăçалхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче ватлăхри ĕç пенсийĕсене, инвалида тухнипе тата тăрантарса пурăнакана çухатнипе параканнисене 6,5 процент индексациленĕ. Çакă 2013 çулхи инфляци шайĕпе çыхăннă.***

Черетлĕ ӳсĕм хыççăн пирĕн хутлăхра пурăнакан 324 пин çыннăн е республикăри пенсионерсен 84 процентĕн тӳлевĕ пысăкланнă. Ватлăхри ĕç пенсийĕсем вăтамран 615 тенкĕ хăпарса 10,2 пин тенке çитнĕ. Урăхла каласан ку кăтарту Чăваш Енре пенсионера пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк висен 2013 çулхи тăваттăмĕш кварталшăн çирĕплетнĕ сумминчен /4963 тенкĕ/ икĕ хут нумайрах.

Кăçалхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче ĕç пенсийĕсене РФ Пенси фончĕн тупăшне шута илсе татах хăпартаççĕ, унсăр пуçне социаллă пенсисене, федераци çăмăллăхçисен уйăхри укçа тӳлевне тата социаллă пулăшу пуххин хакне ӳстереççĕ.

**В.ИЛЬИНА.**

*Шухăш*

# Сиплев хусканăвĕн витĕмĕ

***Этем ĕмĕрĕ, сывлăхĕ тĕрлĕ хускану тунипе тӳрремĕнех çыхăннине несĕлсем ĕлĕк-авалах çирĕплетнĕ. Медицина кăларăмĕсемпе хаçат-журналта кун пирки сахал мар çыраççĕ. Апла пулин те чылайăшĕ çакăн çине алă сулать.***

Ирсерен тĕрлĕ хускану туса шăмшака çемçетессине мĕншĕн хаклаmастпăр-ха? Манăн шухăшăмпа – кун пирки сывлăх сыхлавçисем витĕмлĕ ăнлантармаççĕ. Сыватмăш стационарĕнче сывлăха çирĕплететĕн-и е амбулатори çӳретĕн-и – тухтăрсем хускану тума, ытти майпа усă курса самайланма сĕннине сайра-хутра илтетĕн. Вĕсем эмел çырса панипех тата ăна вăхăтра ĕçме хушнипех çырлахаççĕ. Кун пек чухне амакран çапла майпа кăна хăтăлма пулнăн туйăнать те.

Медицина ăслăлăхĕ организма пачах сиенлемен эмел çуккине йышăнать. Çавăнпа сиплевçĕн пациентăн чирне, хăйне епле туйнине кура сахалрах хавшатаканнине сĕнмелле. Чăн та, ĕçĕ çăмăл мар, мĕншĕн тесен пирĕн хушăра пĕрешкелли çук, кашни хăй тĕнче тесен те йăнăш мар.

«Аргументы и факты» хаçатăн пĕр номерĕнче вулакансен ыйтăвĕсене медицина ăслăлăхĕн докторĕ хуравлани куç тĕлне пулчĕ. Интересленсех вуласа тухрăм. Профессор шухăшĕпе – ирхи хускану кирлех мар иккен, ыйхăран вăрансан пĕтĕм кĕлеткепе туртăнса илни те çителĕклĕ. Вырăн çинчен тăнă-тăманах тухса чупакан çын сасартăк тăнне çухатма пултарать имĕш...

Пирĕн больницăн терапи уйрăмĕнче темиçе çул каялла сывалас тапхăра кĕскетес тĕллевпе мĕнле хускану тумаллине кăтартса сĕнӳсем çырса çапнăччĕ /эпĕ çавсене çырса илнĕччĕ, паян кунччenex усă куратăп/. Тепĕр çулталăкран каллех унта сиплевне тиврĕ, инструкци курăнмарĕ – кирлĕ мар тесе илсе пăрахнă пулас.

Юлашки çулсенче патшалăх физкультурăпа спорта аталантарассине чăннипех хаклать. Хулара кăна мар, ялта та тĕрлĕ сооружени çĕкленет. Шкулсенче физкультура урокĕсене тивĕçлипе хаклама тытăнчĕç. Массăллă спорт ăмăртăвĕсем ирттернин витĕмĕ пысăк. Çапах та спорта хакласси кирлĕ пек пулса пырать теме иртерех. Отчетсене ĕненес тĕк кашни виçĕ çынран пĕри спортсмен шутланать. Çаплах-ши? Иккĕлентерет. Массăллă ăмăртусене çулталăкра икĕ-виçĕ хут хутшăннă кашни çынна /вĕсен хушшинче спортпа туслисем пуррине хирĕçлеместĕп пулин те/ спортсмен теме иртерех.

Ирсерен хускану туни, утнипчупни, йĕлтĕрпе чупни, шыва кĕни усăллă пулнине хамăн тĕслĕхпе çирĕплететĕп. «Сывлăх» хаçат тата ытти кăларăм сĕннĕ хусканусене пурнăçлама тăрăшатăп. Ирсерен 30 минутлăх гимнастикăпа шăм-шака çемçететĕп, сывăрас умĕн 10 минут хама массаж тăвать. Хĕллехи вăхăтра йĕлтĕрпе вăрмана е стадиона куллен çитсе килетĕп. Пĕтĕмлетсе каласан çак тапхăрта йĕлтĕр йĕрне 300-400 çухрăмран кая мар йĕрлетĕп.

Ватăлнă май чир-чĕр тупăнса тăрать пулин те сывă пурнăç йĕркине тытса пыни амак аталанассине чакарать.

Çакна хушса калам: кĕнеке, пичет кăларăмĕ тăтăшах вулатăп, хаçатсемпе çыхăну тытатăп. Çакă та ăс-тăн гимнастикиех, кун-çулшăн усăллă тесе шухăшлатăп.

Пурнăç пуриншĕн те хаклă. Çавăнпа сывлăха упрассишĕн хамăрăн ытларах тăрăшмалла, ӳт-пĕве пиçĕхтермелле – кун пек чухне чир-чĕре çăмăллăнах парăнтарма май килĕ.

■ **Ревокат МОИСЕЕВ.**

Комсомольски сали

**Редакцирен.** *Чăваш халăх хаçачĕн çывăх тусĕ, обществăн пуçаруллă корреспонденчĕ Ревокат Прохорович Моисеев кăçалхи нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕнче 92 çул тултарать. Хисеплĕ ветерана менелникпе ăшшăн саламлатпăр, тăнăç та тулăх пурнăç, телейлĕ кун-çул сунатпăр, малашне те «Хыпар» хаçатăн вулакансене хăйĕн хайлавĕсемпе савăнтарасса шанатпăр.*

●➡ *11, 12 стр.*

Чун киленĕçĕ

# Спорт – вăй-хал çăл куçĕ

***Надежда Мурзина кире пуканĕпе вунă çул каялла туслашнă. Тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнма пуçланă, малти вырăнсене те пĕрре çеç мар çĕнсе илнĕ.***

«2004 çулта питĕ йывăр чирлерĕм. Икĕ хутчен операци сĕтелĕ çине выртма тиврĕ. Сывалсан спортпа туслашрăм. Физкультура вĕрентекенĕ Николай Судаков сĕннипе, хистенипе кире пуканĕ йăтма пуçларăм, – спортри малтанхи утăмсем пирки каласа кăтартать Надежда Егоровна. – Унччен маларах спортăн çак тĕсĕ пирки пĕлмен те, унпа кăсăкланман та».




*● Надежда Мурзина ĕçре хастар, помост çинче патвар.*

Н.Мурзина чи малтан районти ял спорт вăййисен ăмăртăвне хутшăннă. Унта вăл ял тăрăхĕн командин йышĕнче пулнă. Республика шайĕнчи пĕрремĕш ăмăртуранах Надежда Егоровна пысăк çитĕнӳпе таврăннă. Кире пуканне 45 хут ытла йăтса виççĕмĕш вырăн йышăннă. «Çамрăксене пăхса ăмсантăм вара ун чухне. Кире пуканĕ вĕсемшĕн мамăк тултарнă михĕ çеç пек туйăнчĕ. Любовь Эллина тĕлĕнтерчĕ тата. Епле маттур, вăр-вар, вăйлă вăл! Ахăртнех, çавăн хыççăн кире спорчĕпе тата та çывăхлантăм», – тет Надежда. Муркаш районĕнче иртнĕ ял спорт вăййисенче 1-мĕш вырăн йышăннă.

Кашни ăмăрту хавхалану кӳрет ăна. Малти вырăнсене тухсан вара тепрехинче тата правуртарах пулма тĕллев лартать. Шухăш-ĕмĕте пурнăçа кĕртет. Акă нумаях пулмасть Раççей шайĕнчи ăмăртура иккĕмĕш вырăна тухнă вăл. «Шăпаран нумай килет чылай чухне, – вăрттăнлăхсене уçать спортсмен. – Помост çине юлашкинчен тухма шăпа пӳрсен мĕн чухлĕ вăй хумаллине, кама çитмеллине е иртмеллине пĕлсе, курса тăратăн. Çĕнтересехчĕ тесе хăвна хăв хытаратăн, шăм-шака çемçелме чаратăн. Çавăн пек чухне çук вăй-хăват та таçтан тупăнать тата». Надежда Егоровна «Хыпар» турнирне тăватă хутчен хутшăннă. Унта та япăх мар кăтартусемпе палăрнă.

Кире пуканĕ йăтасси – Н.Мурзинăн чун киленĕçĕ. Унăн тĕп ĕçĕн вырăнĕ – Етĕрне районĕнчи Кăкшăм ял тăрăхĕн администрацийĕ. Ăна кунта пултаруллă специалист тесе хакласçĕ. Çавăн пекех вăл ялти культура çурчĕ çумĕнчи «Салам» ансамбле çӳрет. Юрра-таша та ăста вăл. Çавăн пекех Надежда Егоровна – юратнă мăшăр, анне, çемье вучахĕн управçи.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА.**
Етĕрне районĕ,
Кăкшăм ялĕ

Шухăш

# Тăванла халăхсен пĕрле пулмалла

***1654 çулхи кăрлачăн 18-мĕшĕнче Богдан Хмельницкий гетман Переяславль хулинче украин халăхĕн элчисен пухăвне ирттернĕ. Истори пĕлтерĕшлĕ çак пулăмранпа кăçал – 360 çул.***

Казаксен старшинисен пурнăçшăн пĕлтерĕшлĕ ыйтăва – Польшăпа, Крым ханлăхĕпе, Турципе е Раççейпе пĕрлешессине – татса пама тивнĕ. Рада /канаш/ пĕр шухăшлăн пулса йышăнăва çирĕплетнĕ хыççăн Б.Хмельницкий тата Запорожье çарĕсем вырăс патшине Алексей Михайловича тупа тунă. Историре çак пулăм Украина Раççей йышне кĕнĕ кун пек çырăнса юлнă. «Турă çирĕплет, турă вăйлать: ĕмĕр пĕрле пулар!» – халăхăн çав вăхăтри шухăшне çапла пĕтĕмлетет Н.Костомаров. Вырăс, украин, беларуç халăхĕсем – пĕр тĕпрен тухнăскерсем. Вĕсен чĕлхи, культури, тĕнĕ пĕр-пĕрне питĕ çывăх.

Авалах Б.Хмельницкий йышăнăвĕпе килĕшменнисем те пулнă. Хальхи вăхăтра хирĕçле шухăш татах вăйланчĕ. Çак пулăмăн юбилейне евроинтеграцишĕн тăракансен урамри акцийĕсемпе кĕтсе илчĕç. Украина политика ăслăлăхĕсен академийĕн профессорĕ Н.Михальченко каланă тăрăх – XVII ĕмĕрти пулăмсен ăнлавĕ хальхи политиксен суйлав умĕнхи программин тĕп шухăшĕ.

Юлашки вăхăтри ĕç-хĕл сĕмĕнче паллă художникăн, педагогăн, общество деятелĕн, 40 çул ытла Украина çĕрĕн ырлăхĕшĕн тăрăшнă А.Кокелĕн пурнăçĕн тата пултарулăхĕн пĕлтерĕшĕ ӳсет. Вăл чăваш, вырăс, украин халăхĕсен туслăхне çирĕплетме, йăли-йĕркине, культурине пуянлатма нумай вăй хунă. Унăн ячĕпе Раççейĕн «Кĕмĕл ĕмĕр» сăнарлă искусствăпа авангард аталанăвĕ тачă çыхăннă. А.Кокель чăвашсен профессионал сăнарлă искусствине никĕсленĕ, Украина культурин аталанăвне пысăк тӳпе хывнă. Вăл тăрăшнипе Харьковра академи ӳкерчĕкĕн, станок живописĕн шкулне уçнă. А.Кокель Украинăри ӳнер пĕлĕвĕ паракан пĕрремĕш аслă шкула никĕслекенĕ тата унăн ректорĕ пулнă. Каярахпа Харьковри ӳнер техникумĕ Питĕрти, Мускаври ӳнер пĕлĕвĕн учрежденийĕсемпе пĕр рете тăнă, Совет Союзĕнче кăна мар, пĕтĕм тĕнчере ыра ята тивĕçнĕ.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин малтанхи çулĕсенче экрансем çине «Богдан Хмельницкий» фильм тухнă. Вăл халăхсене тăшманпа пĕрле кар! тăрса кĕрешме йыхравланă. Алексей Афанасьевича гетман сăнарĕ пăлхантарса янă. Çав роле ентешĕ Н.Мордвинов /уншăн артист Сталин премине тивĕçнĕ/ выляни пушшех мăнаçлантарнă ăна.

А.Кокель славян халăхĕсен пурнăçĕнчи паллă пулăм – Раççей тата Украина пĕрлешни 300 çул çитнĕ тĕле пысăк произведени /«Переяславль ради»/ хатĕрлеме шухăшланă. Художникăн альбомĕсенчен пĕринче пĕр пайĕн эскизĕ, «Музыка» ят панăскер, упранса юлнă. А.Кокель пурнăçĕнче юрă-кĕвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Çавăнпах, ахăртнех, вăл тĕрлĕ халăха пĕр-пĕрне ăнланма музыка пулăшнине ĕненнĕ. Сывлăхĕ хавшанăран ăста картинăна ӳкерсе пĕтереймен. Çакна Харьковри инженери-строительство институчĕн ӳкерчĕк кафедрин ертӳçи, профессорĕ ректор ячĕпе çырнă заявлени /ăна пĕр çыннăн архивĕнче тупрăмăр/ çирĕплетет. «Вăраха кайнă чире /чĕре, плеврит, гипертони/ пула вăйсăрлантăм. Пиллĕкмĕш хута хăпарма, ĕçе пуçăнма питĕ йывăр. Николай Максимович, манăн ыйтăва хисеплеме, 1953 çулхи нарăсăн 11-мĕшĕнчен ĕçрен хăтарма ыйтатăп. Сире сума сăвакан А.Кокель», – тенĕ унта.



Паян, уйрăмах Украинăн хăшпĕр политикĕ тăван халăхĕ 1654 çултах вырăссемпе пĕр пуласси çинчен çирĕплетнĕ шухăша варалană чухне, А.Кокель – тăванла халăхсене пĕрлештерекен паллă. Çакна çирĕплетекенни – халăхсен хушшинчи культура проекчĕсем: пленэрсем, А.Кокелĕн живопиç произведенийĕсен реставрацийĕ, ăслăлăх вулавĕсем, студентсен Чăваш Ен – Раççей – Украина ăслăлăх-истори экспедицийĕсем. Вĕсем пирки Чăваш Республикинче çеç мар, ытти тăрăхра та аван пĕлеççĕ. Халăхсен çыхăнăвĕн тивĕçĕсене пурнăçласа çак проектсем Чăваш Енре нацисен, конфессисен хушшинчи хирĕçтăрăва пусараççĕ, çамрăксене тĕрлĕ халăх çыннисене хисеплеме вĕрентеççĕ.

Анчах пăшăрхантараканни те çук мар. Проектсене пуçаруллă уйрăм çынсем пурнăçлаççĕ. Кокель мероприятийĕсене ирттерессине ЧР Культура, Вĕренӳ министерствисен тĕп ĕç-хĕл шутне кĕртме тахçанах вăхăт çитнĕ.

■ **Владимир ВАСИЛЬЕВ, культурологи докторĕ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ**

Юбилей-асăну

# Унăн сăмахĕсем хĕлхем кăларнă

***ЧАССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Çемен Элкер премийĕн лауреачĕ, Чăваш халăх писателĕ, прозаик, публицист Лаврентий Таллеров çуралнăранпа 85 çул çитрĕ. Шел, çак куна пурăнса çитеймерĕ вăл. Калем ĕçĕнчи тусĕсем, ĕçтешĕсем, çывăх çыннисем, юлташĕсемпе пĕлĕшĕсем çыравçăн юбилейне асăнса паллă тума Литература музейĕнче пухăнчĕç.***

...Л.Таллеров ача чухне артист пулма ĕмĕтленнĕ иккен. Анчах... «Артист пулас тенĕ те Чăваш халăх писателĕ пулса тăнă, – аса илчĕ мăшăрĕ Роза Александровна. – Чăваш патшалăх драма театрĕ студи уçма хатĕрленнине пĕлсен çиччĕмĕш класс ачи пĕчченех Шупашкара килнĕ. Каçхине урамра çӳрекенскере ырă кăмăллă пĕр çын асăрханă, хăйĕн хваттерĕнче çĕр каçарнă. Ирхине театра çавăтса кайнă. Экзамен йышăнаканни сĕтеле пӳрнисемпе тăкăртаттарса темĕнле кĕвĕ кăларнă. Анчах Лаврентий Васильевич, пăлханса ӳкнĕскер, тĕрĕс хурав параймн. Ăна тепĕр çул килме сĕнсе ăсатнă».

«Еплерех ташлатчĕ тата. Яштака, хитре. Пĕрремĕш хут ăна Володарский урамĕнчи редакцире тĕл пултăм. Айккинерех пăрăнса чылайччен сăнаса тăтăм, – çамрăклăхне куç умне кăларчĕ Ева Лисина çыравçă, куçаруçă. Вăл Таллеровăн йăмăкĕпе туслă пулнă, ытти тăванне аван пĕлнĕ, çемйипе çыхăну тытнă. – Артист мар, паллă çыравçă пулса тăчĕ. Тĕлĕнмелле пысăк кăмăллă çынччĕ. Чăн чăвашла калаçатчĕ, çыратчĕ».

Шăпа пӳрнинчен иртеймĕн тени тĕрĕсех. Лаврентий Таллеровăн пурнăç çулĕ литература каçалăкĕ урлă выртнă. Малтан Комсомольски районĕн хаçатĕнче ĕçленĕ. Унтан «Коммунизм ялавне» /халĕ – "Хыпар"/ вырнаçнă. «Тăван Атăл» журнал редакторĕнче нумай çул ĕçленĕ. Унăн калемĕ тивĕçлĕ канăва тухсан та мăкалман. Кунашкалли сайра пулать: куçне яланлăха хупиччченех çырнă вăл. Палăртнине пурнăçа кĕртсе хăварма ĕлкĕрес тенĕн çанă тавăрса ĕçленĕ. Ĕлкĕрнĕ, анчах юлашки ĕçĕсем пичетленнине курайман. «Пурнăç – пурăнма» повеçĕ писатель çĕре кĕрсен кун çути курнă.

Л.Таллеров мĕн пур ĕçе чĕре хушнипе, туртăм пуррипе тунă. Çавăнпах ĕçĕ-хĕлĕ ăнса пынă. Халăх нушине аван пĕлнĕ вăл. Ял çынни, унăн кулленхи çăмăл мар пурнăçĕ пирки нумай çырнă.

«Чăваш литературинче, культуринче Лаврентий Таллеров пек çын сахал, – терĕ ЧР Профессионал писательсен союзĕн председателĕ Сергей Павлов. – Вăл ăслă, мăнаçлă, чăн-чăн этем. Сасă хăпартса калаçнине, çын пирки усал каланине унран нихăçан та илтмен. Çыракан кашни çын унпа танлашма, ун пек пулма тăрăшать. Акă паянхи пек ас тăватăп. Атте «Çăлтăр витĕр çул курăнать» романа вулама пуçланăччĕ. Унта вăл Канаш районĕнчи пирĕн ялпа çыхăннă самантсене асăрханă. Çакăн хыççăн чăваш халăх историне тĕпчес туртăм çуралчĕ».



*● Сулахайран сылтăмалла: çыравçă мăшăрĕ Роза Александровна, Порфирий Афанасьев, Сергей Павлов, Демьян Семенов, Ăсан Уçăпĕ.*

Л.Таллеровăн хайлавĕсем халăха çывăх тăраççĕ, вăл е ку саманан çивĕч ыйтăвĕсене çĕклеççĕ. Вăл – сăмах, сăнар, сюжет ăсти. «Литературăн аслă çулне уçаканĕ – Константин Иванов. Унпа юнашар Çеçпĕл Мишши, Юман, Хусанкай, Хумма Çеменĕ утаççĕ. Таллеров та çав йышра, – палăртрĕ филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Юрий Артемьев профессор. – Аслă çул çинче хăйĕн сулмаклă еткерлĕхне палăк пек лартса хăварчĕ. Маншăн тĕп тӳре – Хветĕр Уяр. Вăл Лаврентий Таллеров пирки сăмах пуçарсан: «Чĕлхи...», – тетчĕ те урăх нимĕн те чĕнместчĕ. Ахалех паллăччĕ: унăн сăмахĕсем пĕртен пĕр вырăнне тупса хĕлхем кăларма пултарнă».

Чăваш халăх писателĕшĕн Денис Гордеевшăн Лаврентий Таллеров ашшĕ, пиччĕшĕ, вĕрентекенĕ вырăнĕнче пулнă. «Мана, хаçат ĕçĕнче нимĕн те чухламанскере, редакцие ĕçлеме чĕнсе илчĕ, – аса илчĕ Д.Гордеев. – Нихăçан та шаккаса тăрса вĕрентмен вăл. Хăй тĕслĕх пулнă. Пĕр шухăшлă, пĕр тĕллеве тĕпе хурса ĕçлекен çынсем кирлине туйнă, çавсене ӳстерме тăрăшнă. Пирĕнпе пĕрле ĕçленисенчен чылайăшĕ каярахпа писательсем, редакторсем пулса тăчĕç. Таллеров шкулĕ епле хăватлă!»

Виталий Станьял, Демьян Семенов Таллеровпа пĕрле «Коммунизм ялавĕнче» ĕçленĕ çулсене аса илчĕç. «Ĕçе тĕплĕ, пĕлсе тăватчĕ. Акă Н.Яковлева, Н.Григорьева, В.Яковлев артистсем пирки виçĕ материал çырчĕ. Шухăшлатăн та – пĕр пекки пирки çырнă чухне пĕрешкел сăмах, пĕрешкел шухăш пулассăн туйăнать. Таллеровăн апла мар: виççĕшĕ те расна пулса тухрĕç. Унпа танлашма пултаракан сахал», – терĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕнче нумай çул ĕçленĕ Д.Семенов.

«Пĕчĕк чухнех вулама юратнă эпĕ. Халĕ те чăвашла вулама кăмăллатăп, – терĕ Каçалсен ентешлĕхĕн ертӳçи Александр Капитонов. – Кашнинчех шухăшлатăп: писательсен çакăн пек талант ăçтан тупăннăха?» А.Капитонов юбилей-асăну каçне парнепе килнĕ: Роза Александровнăн хул пуççи çине çӳçеллĕ тутăр уртса ячĕ.



*● Ева Лисина.*

Лаврентий Таллеров пултарулăхĕ çамрăксемшĕн те кăсăклă. Вĕсем çыравçă кĕнекисене вулаççĕ, хайлавĕсем тăрăх тĕпчев ĕçĕсем хатĕрлеççĕ. Акă И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки К.Григорьева Лаврентий Таллеровпа Василий Беловăн ял прозине танлаштарса çырнă ĕçĕпе паллаштарчĕ.

Лаврентий Таллеров Чăваш Республикин пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварнă, чăваш культуринче, литературинче, журналистикинче писателĕн тӳпи, пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Вăл чăннипех те мухтава, халăх хисепне тивĕç çын. Унăн ячĕ, сăнарĕ ĕмĕр çутă пулĕ. Шупашкарти пĕр урама Лаврентий Таллеров ятне пама йышăннă. Ку ыйтăва хальхи вăхăтра ятарлă комисси тишкерет. Çавăн пекех çыравçă çуралса ӳснĕ, ĕçленĕ Каçал тăрăхĕнче те Асăну хăмисем е палли пулмаллах.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА.**
Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем

# Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!



Эпир, Çĕрпӳ районĕнчи Апакасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем, РФ тава тивĕçлĕ артисчĕ, Чăваш халăх артисчĕ, Кабарда-Балкар тата Дагестан республикисен искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Аристарх Гаврилович Орлов-Шуçăм композитор тата дирижер çуралнăранпа 100 çул çитнине асăнса унăн тăван çĕрĕнче палăк лартмашкăн пулăшма ыйтатпăр. Палăк эскизне Валерий Ельмаков художникпе Петр Пупин скульптор хатĕрленĕ.

Культура атланса пынă саманара, авалхи йăла-йĕркене чĕртсе тăратма ăнтăлнă вăхăтра мухтавлă ентешĕмĕр ялĕнче çĕкленекен палăкăн пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Вăл çамрăк ăрăва А.Орлов-Шуçăм пирки нумай çул аса илтерсе тăрĕ, культура, истори еткерлĕхне упрама вĕрентĕ.

Хальхи вăхăтра вырăнти халăх укçипе виçĕ метр çӳллĕш постамента вырнаçтарнă. Малалла ĕçлеме нухрат çитменни чăрмантарать. Ырă çак ĕçе хутшăнма кăмăл тăвакансене, кирек епле майпа пулăшма хатĕр çынсене малтанах чĕререн тав тăватпăр.

Укçа-тенке çак шут çине куçарма пулать:

**Р/с 40230781087518003157[1] "Раççей Перект банкĕ" ОАО Çĕрпӳри 4437-мĕш уйрăмĕ**
**ОГРН 1027700132195**
**ИНН 7707083893**
**КПП 213002001**
**БИК 049706609**
**К/р 30101810300000000609 ГРКЦ НБ ЧР банка России, Шупашкар хули**

Тĕплĕнрех пĕлес текенсем çак адреспа: **429903, ЧР, Çĕрпӳ районĕ, Пайтуш ялĕ, Совет урамĕ, 14 çурт** – çырма е **8987 663 91 16** телефонпа шăнкăравлама пултараççĕ.

# Сăвăçа асăнса – курав

***Чăваш çыравçи, поэт, публицист, ЧР тава тивĕçлĕ зоотехникĕ Г.Илепер /Михайлов/ çуралнăранпа кăрлачăн 27-мĕшĕнче 75 çул çитрĕ. Шел, Григорий Михайловичăн ĕмĕрĕ кĕске пулчĕ.***

Г.Илеперĕн литературăри пултарулăхĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче палăрма, аталанма пуçланă. Малтан вăл Вăрнар районĕнчи "Çĕнтерӳ çулĕ" хаçатра, унтан "Знамя", Колос" "Ленинец" колхозсенче зоотехникре ĕçленĕ. Илеперĕн сăввисем "Униче" ятпа уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă.

Вăрнар районĕнчи Иртеменкасси ял вулавăшĕнче писатель юбилейне халалланă "Тăван кĕтес – чĕре юрри" курав уçăлнă. Вăл тăван çĕрпе тачă çыхăннă, унран вăй-хал илсе тăнă çыравçăн кун-çулĕпе тата пултарулăхĕпе паллаштарать.




Григорий Михайловичăн сăввипоэмисем çĕр ĕçченĕн, выльăх ĕрчетекенĕн пархатарлă ĕçне, тăван ен хитрелĕхне, уçă кăмăллă ентешĕсене мухтаççĕ. Унăн хайлавĕсене критиксем пысăк хак панă, халăх çулсем иртсен те юратса вулать.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

# Олимп вăййисене халалланă уяв

***Кĕçнерни кун РФ спорт министрĕ Виталий Мутко регионсемпе видеоконференци ирттерчĕ. Сăлтавĕ – «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăртăва епле хатĕрленни.***

«32-мĕш хут иртекен спорт мероприятийĕ кăçал та çĕр-шыври 71 регионта иртĕ. Унта хутшăнакансен йышĕ çулленн ӳсет. Раççейре йĕлтĕрпе пин-пин çын туслă, секцисенче 200 пин çамрăк ăсталăха туптать. Спортăн хĕллехи тĕсĕсемпе яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç кăна мар, ашшĕ-амăшĕпе ачисем те, ветерансем те кăсăкланаççĕ. Спорт инфратытăмне аталантарасси – министерствăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри. Юлашки çулсенче чылай регионта йĕлтĕрçĕсемпе биатлонçăсен центрĕсем хута кайрĕç. Çывăх вăхăтра вĕсем ытти облаçпа республикăра та пулĕç. Кăçалхи «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăрту – Олимп вăййисене халалланă спорт уявĕ. Вăл «Раççей, малалла, Сочири çĕнтерӳсем патне» чĕнӳпе иртет», – терĕ министр.

Видеоçыхăнăва Мускав хулин, Тутарстан Республикин, Мускав, Челябинск, Чул хула, Мурманск, Свердловск облаçĕсен тата Чăваш Енĕн спорт ведомствисен ертӳçисем тухрĕç. Вĕсем регионта йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне мĕнле хатĕрленнипе паллаштарчĕç. Ытларахăшĕ çанталăк сивĕтнипе ăмăртăва урăх вăхăта куçарнине пĕлтерчĕç. Çак сăлтавпах пулĕ унта хутшăнакансен йышĕ сахал пуласси не палăртрĕç.




«Пĕтĕм Раççейри чупăва эпир хатĕр. Ăмăртусем 100 яхăн лапамра иртĕç, пур районпа хулара, çавăн пекех 70 ял тăрăхĕнче уйрăм стартсем пулĕç, – терĕ ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников. Кăçалхи «Йĕлтĕр йĕрĕ» пирĕн республикăшăн питĕ пĕлтерĕшлĕ: пĕрремĕшĕнчен – ăмăрту 10-мĕш хут иртĕ; иккĕмĕшĕнчен – ăна Олимп вăййисене халалланă. Хальхи вăхăтра кашни район-хулара Олимп çулăмĕн уявĕсене йĕркелеççĕ. 42 çул хушшинче пĕрремĕш хут Чăваш Ен спортсменĕ Олимпиадăна хутшăнать, вăл – фристайл ăсти Елена Муратова. Юлашки хут пирĕн республика йĕлтĕрçи Владимир Воронков 1972 çулта Пĕтĕм тĕнчери ăмăртура ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. Кăçал вăл Шупашкарта иртекен «Йĕлтĕр йĕрĕн» тĕп судйи пулĕ. Çавăн пекех Олимп талисманĕн – мулкачăн – авторĕ Сильвия Петрова та старта тухĕ», – пĕлтерчĕ Сергей Владимирович.

Аса илтеретпĕр: «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăрту ыран, нарăсăн 2-мĕшĕнче, республикăри пур район-хулара 12 сехетре пуçланать. Тĕп старт «Шупашкар: 500 çул» паркра иртĕ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

# Хаяр тытăçусем витĕр

***Сталинград хулине тăшман аллине парас мар тесе пынă хĕрӳ çапăçусене пирĕн ентешсем те хутшăннă. Шел, районта халĕ çав хаяр тытăçусем витĕр тухнă пĕр фронтовик кăна пурăнать. Вăл – Пикшик ялĕнчи Н.Васильев.***

Нестер Васильевич вăрçа 1942 çулта кайнă. Юратнă пиччĕшĕн – нимĕç фашисчĕсемпе çапăçса пуç хунă Димитрийшĕн тавăрас шухăшпа 18 çултах çар тумĕ тăхăннă. Ăна юнлă тытăçусенчен пĕрне – Сталинград çапăçăвне – хутшăнма лекнĕ.

– Çав вăхăт яланлăхах асра юлчĕ. Çанталăк тĕтреллĕччĕ. Пирĕн чаçе гвардин 15-мĕш дивизийĕпе пĕрле малалла кайма приказ пачĕç. Тупăсенчен вирлĕн персе тăнă хыççăн пирĕн танксем те, эпир те тăшман çинелле вирхĕнтĕмĕр. Фашистсене Калач хули çывăхĕнче хупăрласа илтĕмĕр. Вĕсем çакăнта пысăк вăйне çухатрĕç, – каласа парать ветеран.

1943 çул пуçламăшĕнче хĕл питĕ сивĕ тăнă. Нестер Васильевича Сталинград патĕнчи унка тĕп тăвиччченех çапăçма тӳр килмен, кăрлач уйăхĕн 13-мĕшĕнче йывăр аманнă. Эвакогоспитальте 3 уйăх сипленсен саппас 11-мĕш полка янă. Ун йышĕнче чăваш каччи Курск, Белгород çывăхĕнчи тытăçусене хутшăннă, Германие çитнĕ, çĕр-шыв наградисене тивĕçнĕ.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**
Красноармейски районĕ

Хӳтлĕх

# Пенси правине палăртмалли çĕнĕ йĕрке

***Çак ыйтупа кăрлачăн 17-мĕшĕнче РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕнче массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсем валли пресс-конференци иртрĕ. Ăна Роза Кондратьева управляющи ертсе пычĕ. Мероприятие унăн çумĕсем Татьяна Дроздова, Ирина Коннова, Валерий Николаев тата Чăваш Республикин Патшалăх ĕç инспекцийĕн ертӳçин çумĕ Михаил Поляков хутшăнчĕç.***

***Раççейре 2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче граждансен пенси правине йĕркелемелли тата обязательнăй пенси страхованийĕн тытăмĕнче пенси палăртмалли çĕнĕ йĕрке ĕçе кĕрет.***

***«2013 çулхи раштав уйăхĕн вĕçĕнче пенси тытăмĕн малалли аталанăвĕпе, ĕç сыхлавне çĕнетсе улăштарассипе, ĕç условийĕсене лайăхлатассипе, урăхла каласан ĕçлекен граждансен сывлăхне упрассипе çыхăннă чылай саккун йышăннă. Вĕсене тĕплĕн тишкерсе тухрăмăр, ăнланмалла туса хатĕрлерĕмĕр. Çакăнпах ĕç вĕçленмест-ха, кăçалхи пĕрремĕш кварталта çĕнĕ документсем татах пулĕç. Паянхи пресс-конференцин тĕллевĕ – çавсенчен хăшĕ-пĕри 2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче вăя кĕнине пăхмасăр, пĕрремĕш хут вĕсем çинче чарăнса тăрса граждансене пырса тивекен çĕнĕлĕхсемпе тата улшăнусемпе паллаштаратпăр, – палăртрĕ Роза Кондратьева ĕçлĕ тĕл пулăва уçнă май. – Паянхи ĕç пенсийĕ виçĕ пайран тăрать. 2015 çулта вара страховани тата пухăнса пыракан пенсисем пулаççĕ».***

***Уйрăм управляющийĕ страховани тата пухăнса пыракан пенсисене 2015 çултан йĕркелессипе, нумай ачаллă амăшĕсен пенси ирĕкне 2014 çулта çĕнĕрен пăхса тухассипе, пенсие маларах палăртас тĕллевпе çитес çул ĕç условийĕсене социаллă хаклавĕн пĕтĕмлетĕвĕсене ĕçе кĕртессипе çыхăннă ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ.***

### Страховани пенсийĕ

Страховани пенсине тивĕçмелли условисем: хĕрарăмсен – 55, арçынсен 60 çул тултармалла; страховани стажĕ 15 çултан кая мар пулмалла; ĕçленĕ пĕтĕм тапхăрти пенсин уйрăм коэффициенчĕ сахалтан та 30-па танлашмалла. Роза Алексеевна çирĕплетнĕ тăрăх – çакăн чухлĕ бала чи пĕчĕк шалу илекен çын 15 çулта пухма пултарать. Асăннă кăтарту – çине тăрса çĕнсе илни мар, çавна май ăна пысăклатасси тĕп тĕллев шутланмалла.

Çапла вара тивĕçлĕ канăва тухмалли ӳсĕме улăштарман, стаж тăсăмĕпе официаллă шалу пĕлтерĕшлĕ пулать.

Страховани пенсийĕ палăртмалли условисем 2025 çулта пурнăçа кĕрĕççĕ. 2015 çулта куçăм тапхăрĕ вăйра тăрĕ: кирлĕ стаж ун чухне 6 çула çитмелле /унтан кашни çулталăкра пĕршер çул хушăнмалла/, пенсин чи пĕчĕк коэффициенчĕ 6,6 пулмалла / асăннă кăтарту та çуллен пысăкланмалла/.

Енчен те тивĕçлĕ кану ӳсĕмĕ тĕлне ку кăтартусем кирлинчен сахалрах пухăнсан страховани пенсине памалли вăхăта каярах хăвараççĕ е социаллă пенсипе тивĕçтерме тытăнаççĕ /хĕрарăмсене – 60, арçынсене 65 çулта/. Çавăнпа пĕрлех ун çумне регионти пенсионера пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе чухлĕ тӳлев хушаççĕ.

Граждансен страховани пенсийĕн прави коэффициентсенче палăрать. Вĕсен виçине ĕçленĕ кашни çулшăн палăртаççĕ. Шалу мĕн чухлĕ пысăкрах – пĕлтерĕшĕ те сумлăрах. Çулталăкри коэффициента официаллă ĕç укçинчен кăна шута илеççĕ. Пенси фончĕ вĕсене кашни çыннăнне уйрăм шутлать. Мĕн чухлĕ пухăнса пынипе «Страхланă çыннăн уйрăм пӳлĕмĕ» электрон сервисра паллашма пулать.

**Страховани стажне** ĕçленĕ вăхăтра Пенси фондне взнос тӳленĕ тапхăр кĕрет. Ĕçлевĕн «сăрă» рынокне легализацилес тĕллевпе Ĕç кодексĕпе килĕшӳллĕн ĕçлекенпе хуçа хушшинчи хутшăнусене йĕркелесе тăракан граждан-право килĕшĕвĕсене 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен çирĕплетме чараççĕ. Ĕç килĕшĕвĕ туманшăн административлă майпа явап тыттараççĕ: должноç çыннисене – 10-20 пин, уйрăм предпринимательсене – 5-10 пин, юридици сăпатĕнче тăракансене 50-100 пин тенкĕ таран штаф тӳлеттереççĕ.

Çӳлерех асăннă стажа страхламан çак тапхăрсене кĕртеççĕ: çар службинче призыв йĕркипе тăнине /пĕр çулталăкшăн – 1,8 коэффициент/, ĕçлемен граждансене ачана 1,5 çула çитиччен, сусăр ачана, пĕрремĕш ушкăн инвалидне, 80 çултан иртнĕ ватă çынна пăхнăшăн уйрăм коэффициент параççĕ. Ачапа ларнă тапхăрта çак хисеп вĕсем миçен пулнипе çыхăннă: пĕрремĕшне пăхнă кашни çулшăн – 1,8, иккĕмĕшĕшĕн – 3,6, виççĕмĕшĕпе тăваттăмĕшĕн – 5,4. Йĕкĕреш е хăрăсах виççĕ çуратсан пĕтĕм коэффициента хушаççĕ. Йĕкĕрешсен амăшĕ, сăмахран, 5,4-та /1,8 тата 3,6/ тивĕçет.

Çапла майпа патшалăх амăшлăха хӳтĕлессине вăйлатса пырать. Виçĕ ача çуратнă хĕрарăмсен пенси правине халĕччен иккĕшне 1,5 çул пăхнине /пĕтĕмпе – 3 çул/ шута илсе кăна страховани çулталăкĕн хакĕн виçипе пахаланă, 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен – виçĕ ачашăн /пĕтĕмпе – 4,5/. 2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен тăваттăмĕш ачапа ларнине те шута илеççĕ /пĕтĕмпе – 6/.

**Страховани пенсийĕн виçине** мĕн пур коэффициента вĕсен çулталăкри хакĕ çине хутласа палăртаççĕ. Пенсин пĕр коэффициентне 2015 çулшăн 64,1 тенкĕпе хакланă. Тивĕçлĕ кану ӳсĕмне çитнине пăхмасăр пенси ыйтмасăр малалла ĕçлекен граждансене хавхалантармалли нормăна саккун тăрăх пĕрремĕш хут палăртнă. Кун пек чухне преми коэффициенчĕпе усă кураççĕ. Тĕслĕхрен, пенсие 5 çул каярах тухсан çирĕплетнĕ /фиксациленĕ/ тӳлев – 36 процент, страховани пенсийĕ 45 процент ӳсеççĕ, 10 çул тăк асăннă кăтартусем 2,11 тата 2,32 хут нумайланаççĕ.

Страховани пенсийĕн çирĕплетнĕ пайĕ пулать /ăна пенсин халĕччен формулине те кĕртнĕ/, 2015 çулшăн унăн виçине уйăхра 3935 тенкĕ çирĕплетнĕ. Ĕç стажĕ пур пĕрремĕш ушкăн инвалидсене, 80 çулти граждансене, Çурçĕрте ĕçленисене, вĕсен шучĕпе пурăнакансемлĕ пенсионерсене асăннă пая хальхи пекех пысăклатнă виçепе тӳлеççĕ.

Тивĕçлĕ канăва каймасăр ĕçлекенсен ку тӳлев преми коэффициенчĕ чухлĕ пысăкланать. Унсăр пуçне çĕр ĕçĕнче 30 çултан кая мар тăрăшнă, халĕ те ялтах пурăнакан тата ĕçлемен граждансен çирĕплетнĕ тӳлевне 25 процент хăпартма тĕллев лартнă. РФ Правительстви çывăх вăхăтрах тивĕçлĕ перечень туса хатĕрлеме палăртнă, унпа килĕшӳллĕн çĕр ĕçченĕсен пенсине 2016 çулта ӳстермелле.

2015 çулта ĕçлеме тытăннисен страховани пенсийĕ çĕнĕ саккунпа туллин йĕркеленет. 2015 çулччен страховани стажĕ пухнисен – пулас пенсионерсен – ирĕкĕ сыхланса юлать, 2014 çулта çав тапхăра пенсин уйрăм коэффициентне куçараççĕ.

Хальхи пенсионерсен пенси виçи улшăнмасть, ăна та коэффициентпа палăртаççĕ. Ĕçлекен пенсионерсен пенсие çуллен шутлаттармалли ирĕкĕ сыхланса юлать, вĕсен уйрăм коэффициенчĕн чи пысăк пĕлтерĕшĕ 3-пе танлашмалла.

Инвалида тухнипе, тăрантарса пурăнакана çухатнипе паракан страховани пенсийĕсене ватлăхра тивĕçекенни евĕрех шутлаççĕ.

**Пенсие маларах кăларассипе** çыхăннă право нормисем сыхланса юлнă. 1-мĕшпе 2-мĕш списоксене тата ыттисене улăштарман. Сиенлĕ тата хăрушă условисемлĕ ĕç вырăнĕсем пур организацисен хушма тарифĕсене 2013 çултан çирĕплетнĕ: 1-мĕш список тăрăх /2-мĕш тата «пĕчĕк» списоксем/: 2013 çулта – 4 /2/ процент; 2014 çулта – 6 /4/; 2015 çулта – 9 /6/.

Сиенлĕ тата хăрушă условисемлĕ ĕç вырăнĕсем пур организацисен кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ятарлă хаклав иртермелле. Унăн кăтартăвĕсем тăрăх çирĕплетнĕ ушкăна кура РФ Пенси фондне тӳлемелли взносăн дифференциллĕ тарифĕпе /2-8 процент/ усă кураççĕ е унран хăтараççĕ. Хушма тарифа пĕчĕклетме май пурри ĕçпе тивĕçтерекенсене ĕç условийĕсемпе сыхлавне лайăхлатмашкăн экономика тĕлĕшĕнчен хавхалантарать.

Ĕçлекен çынпа калаçса татăлса хуçа патшалăхăн шутланман пенсипе маларах тивĕçтермешкĕн ПШПФпа килĕшӳ тума пултарать. Кун пек чухне хушма взнос çав тытăма хывать. Пенсие маларах тухмалли ирĕк пур граждансем тивĕçлĕ кану вăхăтне каярах хăварма пултараççĕ – страховани пенсийĕ палăртмашкăн хавхалантаракан коэффициента тивĕçеççĕ.

### Пухăнса пыракан пенси

2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пенсин уйрăм тĕсĕ пулса тăраканскере РФ Пенси фончĕ те, ПШПФ те палăртма пултараççĕ. Памалли тата тӳлемелли йĕрке улшăнмасть: пухăннă укçана ăна тӳлемешкĕн палăртнă тапхăра – 228 уйăха /19 çул/ – пайлаççĕ. 2016 çултанпа ку кăтартăва пухăнса пыракан пенсие тивĕçнисен ĕмĕрĕн тăршшĕпе çыхăннă статистикăн официаллă кăтартăвĕсене тĕпе хурса федераци саккунĕпе çуллен çирĕплетеççĕ. Хальхи пекех тӳлевĕн 3 тĕсĕ – пĕр хут тивĕçтермелли, тапхăрăн памалли, пухăнса пыракан пенси – сыхланса юлать.

1967 çулта тата ун хыççăн çуралнă граждансен асăннă пенсие йĕркелес ыйтăва уçăмлатмалла, мĕншĕн тесен унпа тивĕçтерессин шайĕ çакăнпа тӳрременĕх çыхăннă. 2015 çул вĕçлениччен суйламалла: е взноса страховани пенсине ямалла, е пухăнса пыракан пенсие малтанхи пекех 6 процент куçармалла. Сăмах май, пĕрремĕшне патшалăх инфляци шайĕпе çуллен индексацилет, иккĕмĕшне – çук, вăл инвестици кăтартăвĕсенчен килет. Пухăнса пыраканнине йĕркелессине хирĕçлесе страховани пенсине суйласан çулленхи коэффициент 10-на çитме пултарать. Енчен те гражданин пухăнса пыраканни валли куçарать тăк ку кăтарту 6,25-рен иртмест. Пĕтĕм взноса страховани пенсине хывсан пенси валли халĕччен пухăннă укçана управляющи компани инвестицилет, пенсие кăларнă чухне ăна шута илеççĕ.

**Пенси валли пухăннă нухрата сыхласа хăвармалли гарантиленĕ тытăма** кăçалтан ĕçе кĕртеççĕ. Управляющи компанисен тата ПШПФсен çĕнĕ саккунсем ыйтнине тивĕçтернине тĕрĕслемелли процедура витĕр икĕ çул хушшинче тухмалла. Обязательнăй пенси страхованийĕн тытăмĕнчи ПШПФсен акционера куçмалла, лицензи илмелле, реестра кĕмелле, хăйсен устав капиталне 120 млн тенкĕрен кая мар пухмалла. РФ Пенси фончĕн, ПШПФсен резерв туса хумалла тата гаранти фондне йĕркелеме хутшăнмалла. Çакна Раççейĕн Тĕп банкĕ тĕрĕслесе тăрĕ. Пăтăрмах сиксе тухас тăк пухăннă нухрата номинал виçипе кăна саплаштараççĕ.

1967 çулта тата каярах çуралнă граждансемшĕн кăçал хывнă взноссем пенсин страховани пайне каяççĕ тата нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче – инфляци шайĕнчен кая мар, Пенси фончĕн тупăшне кура ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче индексацилеççĕ.

Енчен те асăннă ӳсĕмри ушкăна кĕрекен çын ПШПФа е управляющи компание суйласси пирки халĕччен заявлени паман пулсан взноссем страховани пенсине йĕркелеме каяççĕ. Вĕсене пухăнса пыраканнине ярас тесен 2014-2015 çулсенче кун пирки çырса пĕлтермелле. Управляющи компание, çав шутра «Тулаш экономбанка» е ПШПФсене суйланă пирки малтанхи çулсенче пĕрре те пулин заявлени панисен пухăнса пыракан пенси валли тарифăн 6 проценчĕ куçать. Граждансен асăннă категорийĕ çакна хирĕçлесе страховани пенсине пуянлатассине тĕпе хума та пултарать – кун пирки заявлени памалла.

2013 çулта управляющи компание суйланă чухне тарифа 2 процент палăртнă граждансен взносĕсене пухăнса пыракан пая яраççĕ. 2015 çул вĕçлениччен вĕсем те хăйсен шухăшне улăштармалли ирĕкпе усă кураяççĕ.

2014 çулта ĕçе кӳлĕнекен çамрăксене пĕрремĕш взнос хывнăранпа 5 çул иртиччен / 23 çул тултариччен/ хăш пенсие финанслама 6 процент куçарасси пирки шухăшлама ирĕк панă. Йышăну тăвиччен взноссем страховани пенсине куçаççĕ.

Кăçал пенси валли пухăнакан укçана инвестицилесси пирки заявлени памалли мел улшăннă. Трансферагент центрĕсем /РФ Пенси фончĕ алă пуснине çирĕплетесси çинчен килĕшӳ тунă организацисем – банксем, ПШПФсем/ тата нумай функциллĕ центрсем пĕр ПШПФран теприне куçасси пирки кăна йышăнма пултараççĕ. Мĕн пур заявлене РФ Пенси фончĕн территори органĕсенче илеççĕ, вĕсене почтăпа /алă пуснине нотариуса çирĕплеттерсе/ тата электрон документĕн формипе яма юрать.

2015 çултан граждансене управляющи компание е ПШПФа куçасси пирки 5 çулта пĕр хут кăна ыйтса çырма ирĕк панă.

**Страховани взносĕ тӳлекенсем тĕлĕшпе те 2014 çулта улшăну пур.** РФ Пенси фондне куçармалли тарифсем кăçал чылайăшĕшĕн халĕчченхи пекех юлнă. Производствăра тата социаллă тытăмра, социаллă тĕллевлĕ коммерциллĕ мар тата аптека учрежденийĕсенче ĕçлекен пысăках мар организацисем тĕлĕшпе пĕчĕклетнĕ тарифсемпе усă курассине 2018 çулччен тăснă. Обязательнăй пенси страхованийĕн тытăмне куçармалли взнос тытса юлмалли чи пысăк сумма кăçал 624 пин тенкĕпе танлашать. Взноса, ĕç пенсийĕн страховани тата пухăнса пыракан пайĕсене финанслассине палăртмасăр, пĕр тӳлевпе хываççĕ. Пенси фончĕ гражданин суйласа илнĕ варианта тĕпе хурса хăй шута илет.

2014 çулта обязательнăй пенси страхованийĕн тытăмĕнчи взноссен суммине уйрăм предпринимательсемшĕн, адвокатсемшĕн, нотариуссемпе харпăр хăй ĕçĕпе пурăнакан ытти çыншăн расчетлă тапхăрти тупăш 300 пин тенкĕрен иртмесен ĕç укçин чи пĕчĕк виçине тĕпе хурса палăртаççĕ. 300 пинрен ытларах тăк – ĕç укçин чи пĕчĕк виçине тĕпе хурса тата расчетлă тапхăрти тупăшăн палăртнă суммиинчен иртнĕ укçан 1 процентне хушса, анчах та ĕçшĕн тӳлемелли чи пĕчĕк 8 виçерен мала мар.

Курав мелĕпе ирттернĕ пресс-конференцие республикăри тата район-хулари 46 МИХ представителĕ хутшăннă май журналистсен Пенси фончĕн уйрăмĕн явапллă çыннисенчен ыйтса пĕлмелли те тупăнчĕ. Кашниех тулли хурава тивĕçрĕ.

■ **Валентина СМИРНОВА**

● ➡ 12 стр.

Хӳтлӗх

Чун туртӑмӗ

# «Ывӑлӑм, тӗтӗме ан сӳнтер...»

***Янмурҫинсем ку тӑрӑха Минчек урамӗ теҫҫӗ. Никандровсен хуҫалӑхӗ ҫавӑнта вырнаҫнӑ. Кирпӗч ҫурчӗ ыттисенчен уйрӑларах ларать, сӑрт ҫамкинче, анкарти хыҫӗнче эппин. Сӑлтавӗ ҫурхи шыв-шур сарӑлнипе ҫыхӑннӑ. Уйрӑм ҫулсенче Мӑн Ҫавал ейӗве тухсан ҫурт-йӗре шыв илни те пулнӑ. Ҫавна май пахчари ҫӗр часах типсе ҫитеймест, акасуха вӑраха каять.***

– Ҫавна шута илсех кукаҫипе кукамай ҫӗнӗ ҫурта сӑрта ларттарнӑ. 1977 ҫултанпа ҫакӑнта пурӑнатӑп. «Ывӑлӑм, тӗтӗме ан сӳнтер, – тесе анне каланӑ сӑмахсем чӗренех кӗрсе вырнаҫрӗҫ, – чунне уҫать Илья. – Кӗрекаҫ хӗрӗпе ҫемье ҫавӑрсан та атте-анне ҫуртне пӑрахмарӑм, тӗтӗме сӳнтермерӗм».

Тӑван тӑрӑхрах ӗҫлесе тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ, кунтах ӗмӗрлӗх канӑҫ тупнӑ амӑшне яланах ӑшшӑн аса илет вӑл. Кукашшӗпе кукамӑшне те манӑҫа кӑлармасть. Мӑшӑрӗ Люба хӑй пекех ӗҫчен те тӑрӑшуллӑ пулнишӑн савӑнать. Икӗ ывӑлпа пӗр хӗр ҫуратса пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларнӑ вӗсем: Владимир контракт йӗркипе хӗсметре тӑрать, Мария Шупашкарта тӗпленнӗ, Михаил аслӑ вӗренӳ заведенийӗнче ӑс пухать.

57 ҫулти арҫыннӑн сӑмах енчӗкӗ тӑкӑнсах тӑрать. Кӗҫех калаҫу лӑпӑ-карҫинкка ӑсталасси ҫине куҫрӗ. Тӗрӗссипе, ик ҫӗр киллӗ Янмурҫинра вӗсене тӑвакансем пулнӑ-ха. Пӗр-икӗ ҫул каялла хӑйӗн ҫыпӑҫулӑхӗпе палӑрнӑ Кирилл Петров Упи тӑрӑхӗнче ырӑ ят хӑварнӑ. Унӑн килӗнчен ҫын татӑлма пӗлмен, лӑпӑ, карҫинкка туяннӑ. Шел, сакӑр вунӑ ҫул урлӑ каҫнӑ май вӑй-халӗ чакрӗ пулинех, ку ӗҫпе аппалансах каймасть. Василий Иванов ӑста та ватлӑх еннелле сулӑнчӗ, хуҫалӑхра куллен кирлӗ япаласене тума пӑрахрӗ. Вӗсен ӗҫне халӗ Илья Мефодьевич малалла тӑсать, ку енӗпе ентешӗсене савӑнтарать. Вӑл ӑста лӑпӑҫӑ кӑна мар, ылтӑн алӑллӑ платник та, пултаруллӑ тракторист та. Ял-йыш ӑна Мӑн Ҫавал урлӑ ҫуллен кӗпер хывмашкӑн /малтанхине ҫурхи шыв илсе кайнипе ҫапла тума тивет Янмурҫинсен/ хастар хутшӑннӑшӑн та тав тӑвать.

«Лӑпӑ тата карҫинкка ҫыхас туртӑм ҫур ҫухрӑмри Кӗрекаҫ ялӗпе ҫыхӑннӑ, – тет Илья Никандров. – Хунькассипе эппин. Пӗррехинче Сергей Васильевичӑн анкартине сухаласа патӑм. Ӗҫшӗн укҫа тӳлес вырӑнне вӑл мана лӑпӑпа ырӑ турӗ. Киле ҫитсен хам та ҫыхма пултарассӑн туйӑнчӗ. Парнене пӑхса ҫавнашкаллине ӑсталама пикентӗм. Мӑн Ямашри пуҫана ҫемйине ҫӗнӗ кайӑк килсен ӑна валли парнелӗх сӑпка майлаштартӑм. Хам тӗллӗнех вӗренсе пытӑм темелле, – вӑрттӑнлӑхне пытармасть арҫын. – Халӗ авӑ чылай япалана хӑва хуллинчен ҫыхма хӑнӑхса ҫитрӗм».



● *Илья Никандров ӑсталанӑ лӑпӑ-карҫинкка чӑннипех ҫыпӑҫуллӑ.*

■ **Георгий ТУСЛИ.**
Красноармейски районӗ.
Сӑн ӳкерчӗкӗ авторӑн

Иртнине аса илсе

# Лашапа тырӑ леҫнӗ, йывӑҫ турттарнӑ

***Иртнӗ ӗмӗрте пире, вӑрҫӑ ачисене, чылай йывӑрлӑхран лаша ҫӑлса хӑварнӑ, вӑлах ӗҫе хӑнӑхтарнӑ. Ҫамрӑк ӑру юхӑннӑ хуҫалӑха ура ҫине тӑратмашкӑн 17-18 ҫултах вӑй питти ҫынсемпе тан хутшӑннӑ.***

50-мӗш ҫулсенче колхозсенче автомобиль транспорчӗ ҫителӗксӗр пулнӑ май патшалӑх планӗсене тултарас тӗллевпе ял хуҫалӑх ҫимӗҫне лавсемпе леҫнӗ. Пирӗн тӑрӑхра пурӑнакансен тырра тата утта – Ҫӗрпӳ районӗнчи Михайловка станцине, ҫӗр улмиеУнкӑҫумӗнчи крахмал заводне турттармаллаччӗ. Лава тухса ҫӳренӗ вӑхӑтра инкек-пӑтӑрмах сиксе тухни те пӗрре кӑна мар пулнӑ: хӑшӗн лаши чирлетчӗ е ывӑнатчӗ, теприн урапи ванса каятчӗ, виҫҫӗмӗшӗн ытти сӑлтав тупӑнатчӗ. Ҫав самантсем паян та манӑҫмаҫҫӗ.

Колхозсем каярахпа пӗрлешсе пысӑкланчӗҫ, пирӗн ялта уй-хир бригадисем иккӗ йӗркелерӗҫ. Пӗрремӗшне атте вунӑ ҫул ертсе пычӗ. Пӗррехинче утӑ ҫулнӑ вӑхӑтра вӑл мана: «Санӑн та Михайловка станцине утӑпа каймалла», – терӗ. Планпа ӑна 7 тонна памаллаччӗ. Ҫирӗм лава 300-400-шер килограмм тиерӗҫ. Вӑйлӑрах тата лӑпкӑрах лашасене ҫынсем маларах йышӑнса пӗтернӗ, мана валли хыткан кӗсре кӑна тӑрса юлнӑ. Лавӗ пысӑкраххине кура атте икӗ лашапа кайма хушрӗ, ут хатӗрӗсене тупса кӳлме хӑех пулӑшрӗ. Янаварсем ҫамрӑк пулнипе ҫула тухсан пӗр-пӗринпе ӑмӑртмалла чупма пуҫларӗҫ.

Пирӗн ялтан станцие таврра ҫулпа Трак сали урлӑ каяс тӑк 35 ҫухрӑм пулать. Вырӑна кӑнтӑрлахи апат тӗлне ҫитрӗмӗр. Анчах чӗрӗ тесе утта йышӑнмарӗҫ. Пилӗк сехет типӗтрӗмӗр. Ӑна капана хывса пӗтериччен каҫ ӗнтрӗкӗ ҫапрӗ. Яла ӗлӗкхи Хурӑнлӑ ҫулпа тӳртен таврӑнас терӗмӗр. Ҫур ҫула ҫитсен тӗттӗмленсе ларчӗ, аслатиллӗ ҫумӑр пуҫланчӗ. Лашасем чупма мар, пушӑ урапасене те аран-аран туртма пуҫларӗҫ. Красноармейски районӗнчи Кӑлава ялне ҫитсен лавҫӑсем ҫакӑнта ҫӗр каҫас терӗҫ. Икӗ лаша кӳлнипе эпӗ малалла пӗчченех кайрӑм, ҫур ҫӗрччен киле ҫитрӗм.

Тепрехинче Шупашкара тырӑ леҫме кайма тиврӗ. Хатӗрлев кантурне ун чухне халӗ ҫӳрекен ҫулпа мар – «Богдан Хмельницкий» урамӗпе анса «Нагорӑй» текеннипе улӑхса пир-авӑр комбиначӗ вырнаҫнӑ лапама хӑпараттӑмӑр. Тырӑ склачӗсем таса уйра ларнӑ.

Ку хутӗнче мана тихаллӑ кӗсре лекрӗ. Пӗчӗкскерпе ҫула тухма кансӗр тесе конюхпа иксӗмӗр ирхине витене хупса хӑвартӑмӑр. Лаша Шупашкара чиперех илсе ҫитерчӗ. Анчах тихана ӗмӗртменнипе ҫилли карӑнса кайрӗ. Сӗтне суса тӑкма хушрӗҫ. Ҫиллине алӑпа сӗртӗнтӗм кӑна – турта хушшинчи кӗсре тапма пикенчӗ, тепре перӗнтӗм ҫеҫ – пуҫне ҫавӑрса сылтӑм хулран ҫыртрӗ. Юнлӑ сурана хӗрарӑмсем таса татӑкпа ҫыхса ячӗҫ. Пӗрлехи вӑйпа кӑкарса-тыткаласа тӑрса кӗсрене сурӗҫех. Ун чухне лаша сӗтне пӗрремӗш хут тутанса куртӑм. Тырра баржа ҫине пушатсан тепӗр кун киле ҫитрӗмӗр.

Пирӗн хуҫалӑх Вӑрнар районне кӗрекен Авруй лесничествинче вӑрман туянса колхозниксене кастарни те манӑҫманха. Машинӑпа турттармашкӑн ҫул ҫуккипе ҫывӑхри яла лашасемпе илсе тухма тиврӗ. Ҫак ӗҫе Иван Горшковпа икӗ ҫамрӑк – Виталий тата эпӗ – пурнӑҫларӑмӑр. Унта пӗр уйӑх ытла тар тӑкрӑмӑр.

Ун чухне ӗҫленӗшӗн алла укҫа тыттарман. Иван пичче пире кӗмӗл пачӗ. Киле таврӑннӑ чухне пур-ҫук нухратпа пасарта шӑлаварпа пушмак туянтӑм.

Ҫав ҫулхи кӗркунне манӑн салтак ячӗ тухрӗ. Хӗсметрен таврӑннӑ ҫӗре эпир хатӗрленӗ йывӑҫран сысна ферми валли апат кухни туса лартнӑччӗ ӗнтӗ.

Иртнӗ тапхӑра ахальтен аса илмерӗм – кӑҫал лаша ҫулталӑкӗ вӗт. Хӗвел тухӑҫ календарӗпе вӑл нарӑс уйӑхӗнче кӑна пуҫланать-ха. Ҫавӑнпа хамӑрӑн тӑватӑ уралла тусӑмӑрсене аса илни вырӑнлӑ та пӗлтерӗшлӗ. Тихаллӑ кӗсре-и вӑл е ӗҫ лаши-и, – пирӗншӗн ҫав-ҫавах урхамах.

■ **Вениамин АРХИПОВ.**
Элӗк районӗ,
Мартынкасси ялӗ

Пӳлӗмри ӳсен-тӑран

# Чечек те туйӑмлӑ

Пӳлӗмри чечексемшӗн хӗллехи тапхӑр чӳк уйӑхӗнчех пуҫланать: кун тӑршшӗ кӗске пулнипе ҫутӑ ҫитмест тата чӳречерен сивӗ кӗрет. Ҫавна пула хӑшӗ сарӑхса ҫулҫӑ тӑкать, тепри ӑшӑтакан хатӗрсен витӗмӗпе типсе ларать.

Кун пек чухне пирӗнтен чылайӑшӗ ҫапла шухӑшлать: вӗсене лайӑхрах шӑвармалла. Типӗ сывлӑша пула чечексене нӳрӗк ҫитмен пек туйӑнать. Апла мар иккен: ҫине-ҫинех шӑварнипе тата нӳрӗк ытлашши пулнипе ӑшӑра вӗсем ҫӳлелле кармашаҫҫӗ. Ҫутӑ ҫитменнипе вара шуранка, вӑйсӑр та тӑсланкӑ курӑнаҫҫӗ.

Ку тапхӑрта вӗсене кантармалла, вунӑ кунра пӗр хут шӑварни те ҫителӗклӗ. Хӗл кунӗсенче тымар тытӑмӗ ӗҫлеменпе пӗрех вӗт, япала ылмашӑвӗ те сисӗнсех каймасть. Ӳсен-тӑран кун пек чухне нӳрӗке сӑхса ӗлкӗреймест – тӑпра йӳҫеклӗхӗ ӳсет, шыв пухӑнса кайнипе тата чӳрече янаххи сиввипе тымар ҫӗрме пуҫлать.

Ҫулҫӑ сарӑхса шанма тытӑннӑ, чӳлмекри тӑпра ҫав вӑхӑтрах нӳрӗ тӗк – тымар хавшанӑ. Чечеке кӑларса илмелле, тӑпрана типӗтмелле. Йӗркене кӗртнӗ ӳсен-тӑрана чӳлмеке тепӗр хут лартӑр та ытлашши ан шӑварӑр.

Хӗл кунӗсенче вӗсене пӑрӑхран илнӗ хыҫҫӑн тӑрӑлтарса лартнӑ шывпа /пӳлӗмри температурӑллипе/ шӑвармалла. Вӗретсе сивӗтнин усси ҫук – кислородран чухӑн. Ӑшӑтни те юрӑхсӑр – ӳсен-тӑран ҫӳлелле кармашать, сиввине тымар япӑх ҫӑтать.

Пӳлӗмри чечексемшӗн витӗр вӗрекен ҫил сиенлӗ. Чӳрече янаххи сивӗ тӗк чӳлмек айне лартмалли пробка е пенопласт материалтан пулмалла. Ҫакна асра тытӑр: пӗлӗмри чылай ӳсен-тӑран ӑшӑ 13 градусран иртсен хӑйне лайӑх туять. Хӑшӗ-пӗри температура вӑл е ку еннелле чакни-хӑпарнине ҫӑмӑллӑнах тӳссе ирттерет. Ҫак пулӑм сасартӑк пулсан кӑна хӑрушлӑх сиксе тухма пултарать. Чечексемшӗн каҫхи температура кӑнтӑрлахинчен 2-3 градус сахалрах пулни усӑллӑ та, анчах тӑрук сивӗтсе пӑрахни мар – кун пек чухне сиенленеҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсене чӳречен сивӗ янаххисенчен куҫарса лартмалла.

Сӑмах май, ку пулӑм чӑтӑмлӑ кактуса пырса тивмест. Цитруслисем, цикламен, олеандр 8-10 градус ӑшӑра хӑйсене лайӑх туяҫҫӗ.

**Асра тытӑр:**

● пӳлӗмри чечексене хӗл кунӗсенче апатлантарма юрамасть – тымар сиенленет;

● ҫак тапхӑрта вӗсен сӑтӑрҫисене пӗтерес тӗллевпе ҫулҫӑсене малтан супӑнь шывӗпе сӑтӑрмалла, кайран – таса шывпа;

● чечек савӑтӗнчи тӑпрана вӗтӗ шӑна ернӗ тӗк эрнере пӗр хут марганцовкӑн шупка шӗвекӗпе шӑвармалла;

● фикус ҫулҫи хӗлле те ҫуталса тӑтӑр тата ан сарӑхтӑр тесен ӑна тӗксӗм тӗслӗ сӑрапа йӗпетнӗ татӑкпа сӑтӑрса илмелле. Ҫак тӗллевпех тымара касторкӑпа /тулли мар кашӑк/ апатлантарма юрать.

Кӑштах кулӑш

**Хӑш ҫӗр-шывра ҫынсен ӗмӗрӗ вӑрӑмраххи пирки тавлашнӑ американсемпе азербайджансем АПШна пынӑ та пӗр районти сыватмӑшра реанимаци уйрӑмӗнче капельница айӗнче выртакан 103 ҫулти ватӑна тӗл пулнӑ.**

**Азербайджанра вара американсем ту ҫинчен чупса анакан шур сухала чарнӑ та унӑн ӳсӗмӗпе интересленнӗ.**

**– 102-ре, – хуравланӑ вӑл.**

**Лешӗсем тинех ҫӑмӑллӑн сывласа янӑ: апла тӑк АПШ-ри халӑх нумайрах пурӑнать. Пӗри чӑтса тӑрайман, старик ӑҫта васкани пирки ыйтнӑ.**

**– Аттерен таратӑп-ха, – тенӗ аксакал. – Асаттепе тавлашнӑшӑн ҫупкӑ ҫитересшӗн вӑл мана...**

**Кӑларӑма Валентина СМИРНОВА хатӗрленӗ.**

# МĔН ÇЫРАÇÇĔ ХАÇАТСЕМ

## Хăйсем çине алă хуракансен ялĕ

***Курченко сали пысăках мар, 400 яхăн çын пурăнать, çапах та малашлăхĕ çук теейĕн. Пĕртен пĕр урамра – хăтлă çуртсем. Шкул, ял администрацийĕн çурчĕ пур. Ялта ача та сахал мар. Нумай çемье кунта мĕн авалтанпах пурăнать. Çак хăрушă пулăм салара 90-мĕш çулсенче пуçланнă тесçĕ. 2000 çулсенче вара арçынсем хăйсем çине алă хурасси темиçе хут ÿснĕ.***

Пурте ăнланмалла мар лару-тăрура вилеççĕ. Акă Рамис. Ăна аслашшĕпе асламăшĕ ÿстернĕ. Лайăх çын пулнă. Çарта службăра тăнă, таврăннă. Кÿршĕ ял хĕрне Наиляна юратнă. Загсра хăйсем пĕрлешнине регистрациленӗ, туйне туса ĕлкĕреймен. Çапах та пĕрле пурăнма пуçланă. Çуллахи ăшă пĕр кунхине кишĕр кăларнă. Наиля тата аслашшĕпе асламăшĕ пахчара юлнă. Рамис пушă михĕсем илме кайнă. Часах килменнипе хыпăнса ÿкнĕ – вăл çакăнса тăнă ĕнтĕ.

Кÿршĕ çуртра икĕ тĕрлĕ инкек. Амирăн малтанах тăван пиччĕшĕ çакăннă. Кăштах вăхăтран ывăлĕ те хăйĕн çине алă хунă.

– Нимĕн те каласа кăтартмастăп, – алă сулать хĕрарăм. – Мана упăшка ирĕк памасть. Вилнисене канăçсăрлантармалла мар тет.

Ывăлĕ 27 çулта пулнă, мăшăрĕ, 3 ачи. Яланхи ĕç пулман, анчах та выçă ларман. Ашшĕпе амăшĕ 2 хутлă çурт хăпартма пулăшнă. Виллине çавăнта стройкăра тупнă та.

### Ашшĕ те, ывăлĕ те

– Хăрушă ку, – ассăн сывлать Зайфяря Аресьева. Унăн малтанах пĕрремĕш упăшки çакăннă. Каярах иккĕмĕшĕ инфаркта пула çут тĕнчерен уйрăлнă. Анчах та чи хăрушши – 7 çул каялла ывăлĕ те çакăнса вилнĕ.

– Вăл тин çеç çартан таврăннăччĕ. 23 çулта кăначчĕ. Хĕрпе туслашрĕ, Аня хăйĕнчен чылай çул çамрăк, 15-рен иртнĕччĕ. Пĕрле пурăнма пуçларĕç. Сывă арçын ача Рамиль çуралчĕ. Тутар халăхĕн йăлипе пирĕн тин çуралнă ачана 40 кун иртмесĕр урама илсе тухмаççĕ. Çак вăхăт иртсен çамрăксем, паллах, ман пата пычĕç. Пĕрле калаçса лартăмăр. Ывăлăм эпĕ банк валли документсем хатĕрленипе кăсăкланчĕ: ирхине машина туянмашкăн кредит илме справкăсем кайса парасшăнччĕ.

Çур çĕр çитеспе кинĕ пĕчĕк ачипе хунямăшĕ патне каллех чупса пынă. Артур пăяв илнĕ те çакăнма тухса кайнă-мĕн.

Халĕ мăнукĕ Рамиль Курченко ялĕнче асламăшĕ патĕнче пурăнать. Кĕркунне шкула кайнă. Арçын ача амăшĕ Астăрханта пурăнать, хăйĕн пурнăçне йĕркелеме тăрăшать.

– Вăл 23 çулта кăна, – тет Зайфяря. – Качча тухман-ха. Ку таранччен ман ывăлăшăн кулянса пурăнать. Иртнипе çеç пурăнма юрамасть – эпĕ ăна пĕрмаях çакна ĕнентерме тăрăшатăп.

Зайфяря хăй 7 çул каялла тепĕр хут качча тухнă.

– Çак ялта арçынсемпе мĕн пулса иртнине эсир пĕлнĕ-и? – ыйтатăп унăн упăшкинчен Валерăран – кунта куçма хăрушă марччĕ-и?

– Çук, хăрушă мар. Эпĕ çакăнса вилме шухăшламастăп.

### Йăлмак хатĕрлеме арçынсене мĕн хистет?

Зайфяря кÿрши Катя Сагитова пĕрремĕш мăшăрне пытарнă. Курченкăра ыттисем пекех вăл та çакăннă.

– Пĕрремĕш мăшăрăм Серкали Амира ывăлĕпе пĕр класра вĕреннĕ, – тет Катя. – Эпĕ ăна хамăрăн пысăк пÿлĕмре йăлмакра тупрăм. Ку инкек хăйĕнпе пĕр класра вĕреннĕ çамрăк çакăнсан 100 кунран пулчĕ. Тĕрĕссипе, вăл пĕрре кăна мар йăлмак тăхăннă. Эрех ĕçсен хăратать пулĕ тесе шухăшлаттăм.

Катя иккĕмĕш мăшăрĕпе Мансур Сагитовпа пурăнать. Çак ял çыннисем. Унăн та ашшĕ хăйĕн çине алă хунă.

– Вăл пĕчченлĕхе пула çак утăма тунă, – тет Мансур. – Манăн хамăн пурнăç ĕнтĕ. Анне вилнĕ. Вăл иккĕмĕш хут авланчĕ. Темĕн йĕркеллĕ пулаймарĕ.

Мĕн пулса иртет, çакăнпа мĕнле кĕрешмелле – никам та пĕлмест.

– Эпĕ хамăрăн салана экстрасенссене чĕнес терĕм, – тет Бибинур Валиева. – Манăн иккĕмĕш сыпăкри пичче çакăнчĕ. Арçынсем мĕншĕн хăйсем çине алă хураççĕ? Ылхан е таса мар вăйсем пулĕ.

Вырăнти муфти юлашки хутĕнче масар территорине хăйсем çине алă хунисене пытарма текех ирĕк памăпăр тесе хăратнă. Çитменнине тата ислам çакна ахаль те хирĕçлет.

Курченко салинчи пулăмсемшĕн муфти нимĕнле таса мар вăя та айăпламасть.

– Нимĕнле ылхан та çук, – тарăхать вăл. Вăйсăрлăха пула çакăнаççĕ. Çапла, пурнăç йывăр. Ĕç çук.

Анчах та ял çыннисем унпа килĕшмеççĕ. Пуяннисем те, ĕçсĕррисем те çакăннă вĕт. Ĕçекеннисем те, ĕçменнисем те. Çемьеллисем те, пĕччен пурăннисем те.

### Экстрасенссем хăйсен сăмахне калаnă

2013 çулхи нарăс уйăхĕнче яла экстрасенссем пынă.

Курченко ялĕнче пурăнакан Рамиля Абдулаева каласа кăтартать:

– Кажетта шаман тата чикан хĕрарăмĕ Аза Петренко зал туллиех макăракан хĕрарăма курасса тĕлленмен те. Çавăнпа вĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн чĕнсе кĕртрĕç. Медиумсем кашни çемьере мĕн пулса иртнине тĕплĕн каласа панă.

Катя Сагитовăна пÿрте кĕмелли картлашка айĕнче темĕн лайăх марри выртнине пĕлтернĕ. Ун айĕнче кивĕ çăра, кинжал, хура çиппе йĕпсем тупнă. Кунта вĕсем мĕн чухлĕ вăхăт выртнă – паллă мар.

Çак япаласене арăмĕпе упăшки кăларса ывăтнă. Тĕлĕнмелле те, çемьери лару-тăру лайăх енне улшăннă.

Пиллĕкмĕш-улттăмĕш хĕрарăма йышăннă хыççăн Кажетта хăйне япăх туйма пуçланă, урама чупса тухнă. Пурте пĕрле ял тăрăх утнă. Экстрасенссем хăш килте кам вилнине пĕр йăнăшсăр палăртнă.

– Çак çуртра мĕн сирĕн? – çурма ишĕлнĕ çурт çине кăтартса ыйтнă шаман.

– Унччен кунта пирĕн шкул пулнă.

– Шкул? Тĕлĕнмелле. Нумай ача пухăнакан вырăнтан яланах савăнăç тапса тăрать, кунта тĕттĕмлĕх туйăнать, вилĕм çак вырăнтан нумай çынна илсе кайнă.

Ватăсем çавăнтах аса илнĕ – Иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче шкул çуртĕнче çар госпиталĕ вырнаçнă. Вилнисене йĕркеллĕ пытарман та темелле. Ачасем унта ку таранччен шăмăсем тупаççĕ. Экстрасенссем шăпах çак вырăн Курченко ялĕнчи инкексен тĕп сăлтавĕ пулнине çирĕплетнĕ.

– Çак салтаксен чунĕсем ку таранччен çурт çийĕн явăнаççĕ, – тенĕ вĕсем.

Ял администрацийĕн пуçлăхĕ Самит Хабибулаев ылханлă çуртра май килсенех пăсма шантарнă.

Экстрасенссем çак вырăна чÿклени çынсем йышлăн вилессине чарса лартĕ тесе йышăннă. Ял çыннисене укçа пухса хура така туяма, чÿк тума сĕннĕ. Çак йăлана ирттерме салипех пухăннă.

Экстрасенссем яла пырса кайнăранпа кунта пĕр çын та вилмен.

### Специалист комментарийĕ

Екатерина Свешникова тухтăр-психиатр: "Суицид – ку чухнехи обществăн чи çивĕч ыйтăвĕ. Статистика çирĕплетнĕ тăрăх – тĕнчере кашни 20 çеккунтра пĕр çын хăйĕн çине алă хурать. Çапла майпа тĕнчере кашни çулах 837000 çын вилет. Çакнашкал тĕслĕх арçынсен хушшинче нумайрах. Сăлтавĕсем мĕнре-ха? Чухăнлăх, çемьери çивĕч ыйтусем, сывăх çынсене çухатни".

■ **Дина КАРПИЦКАЯ.**

/"Московский комсомолец"/

*Шăпасем*

## Юратнă çыннине 62 çул шыранă

***Итали çамрăкĕ Луиджи Австрире украин хĕрне Мокринăна юратнă /каярах вăл ăна Мария тесе чĕнет/. Яланхи истори темелле ĕнтĕ. Апла мар çав. Мĕншĕн тесен çакă 1943 çулта тыткăнри çар çыннисен лагерĕнче пулса иртнĕ.***

«Турăçăм, мĕнлерех ырхан вăл! Çитермелле ăна!» – тесе шухăшланă Мокрина Луиджие пĕрремĕш хут курсан. «Мĕнешкел илемлĕ вăл! Хÿтĕлес пулать ăна!» – çакнашкал шухăшсем явăннă Луиджин пуçĕнче. Вĕсем тĕрлĕ чĕлхепе – вырăсла тата итальянла – шухăшланă, калаçнă, çавăнпа пĕр-пĕрне ăнланман. Çапах та юрату амаланса кайнине ăнланнă.

Вĕсене вăрçă паллаштарнă, мирлĕ кунсем уйăрнă. Ун чухне çамрăксем 20 çул урлă çеç каçнă, апла пулин те вăрçă йывăрлăхĕсене чăтса иртгернĕ кăна мар, хăйсен юратăвне сыхласа хăварнă. «Лагерьте питĕ сивĕ чухне Луиджи мана тата манăн тин çуралнă пепкене Надьăна ăшăтма пыратчĕ. Эпир виççĕн çыпăçса ларнă пек ларататтăмăр, эпĕ хама çав тери телейлĕ туяттăм», – аса илет Мокрина 70 çула яхăн иртсен.

### Сывă пул, Луиджи!

Украин хĕрне Мокрина Юрзука Австрие тыткăнри çар çыннисен лагерьне 1943 çулта илсе пынă. Вăл ача çуратма хатĕрленнĕ, çавăнпа тыткăнра ăна пушшех те йывăр килнĕ. Мокрина пурăнакан баракра питĕ сивĕ пулнă. Нимĕç офицерĕсем пулас амăшне больницăпа юнашар вискоза фабрикине куçарнă. Вăл хĕрне Надьăна çуратнă, çав вăхăтрах Итали салтакĕпе, тыткăнри Луиджи Педуттопа, паллашнă.

Луиджи Мокринăн пĕчĕк хĕрне хăйĕн апатне панă – куç умĕнчех начарланса пынă. 1945 çулта, вĕсен çĕвĕ фабрики çине бомбăсем пăрахнă чухне, Луиджи Марийăпа Надьăна ярса тытнă та çĕр улми уйне тарса ÿкнĕ. Икĕ эрне вĕсем чĕрĕ çĕр улмипе куккурус кăшланă. Луиджи Мокринăн пĕчĕк хĕрĕ валли çĕр улми касăкĕсене чăмласа вĕтетнĕ – вăл ăна Австрие совет çарĕсем кĕриччен хăйĕн ачи вырăнне йышăннă. Шел те, «малалла нумайччен телейлĕ пурăнма» паман. Итальяни? Эппин, Италие кайтăр! Украин хĕрарăмĕ-и? Украинăна çул тыттăр! Луиджи юратнă çыннипе пĕрле пурăнмашкăн ирĕк пама тем пек ÿкĕтленĕ пулин те ăна итлемен. Юрамасть! Юратăва çурмалла касса татнă...

Итали салтакĕ адрес сĕтелĕсене, посольствăна çырнă, ентешĕсенчен çырусем парса янă. Унăн юрату, шанчăк пулнă, асăнмалăх тата вăл уйрăлас умĕн çĕрле Мокринăн çÿç пайăркине касса илнĕ – çак пайăркана вăл 62 çултан хăйĕн юратăвне курсан кĕсйинчен макăра-макăра кăларнă...

Çапла, юратнă çыннине тупасса шанмасăр Луиджи авланнă. Мокрина тăван Хмельницкий облаçне таврăнсан тĕлĕнсе те хăраса ÿкнĕ: яла икĕ арçын çеç чĕрĕ-сывă таврăннă. Каярах Кривой Рог облаçне кайнă, качча тухнă, шахтăра ĕçлеме пуçланă, тата 2 ача çуратнă, анчах... Луиджи Мокринăна пурнăç тăршшĕпех шыранă, хĕрарăм пĕрмаях ăна кĕтнĕ. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр вăхăтра тенĕ пекех мăшăрсăр юлнă. Иккĕшĕ те хваттерте мар, хăйсен çурчĕсенче пурăннă. Пĕр-пĕрин çинчен шухăшласа ирхине 4 сехетрех вăраннă. Луиджи оливăсене шăварнă, Мокрина редис çумланă.

### «Мăшăрăм тейĕн»

«Эсир çĕр улмипе пĕçерĕнĕ хуран кукли тутанса пăхăр-ха, Луиджи ăна килĕштерсех каймасть», – чеен калаçать манпа Мокрина Андреевна. Çав тери тутлă. «Жди меня» телепрограммăра тĕл пулнă хыççăн Луиджи Педутто вун-вун çул иртсен тупнă юратăвĕ патне çултăлăкне икĕ хут килнĕ. «Пĕлетĕр-и, – тĕлĕнет Мокрина мăнукĕ Екатерина, – Луиджи малтанах самолетпа Киева çити вĕçет, ун хыççăн пуйăспа Кривой Рог хулине каять, унтан тин маршрут автобусĕпе пирĕн Красный Горняк поселока çитет /сăмах май, вăл Украина картти çинче çук, çавăнпах ĕнтĕ Луиджи Мокрина-Марийăна чылайччен шыранă. – **Ред./.**

– Эпĕ пĕчĕк хут татки çине хамăн адреспа хушамата çырнă чухне вăл пурнăç тăршшĕпех мана шырасса шухăшламан та. Луиджи кунта хăйне манăн упăшка пекех тыткалать. Çулма тухнă, хĕрсе кайса хăмла çырлине те çулса пăрахнă. Апла юрать-и вара? Пирĕн çĕр улмине çимест, макаронпа пармезан илсе килет. Каç енне вĕсем мирлешеççĕ. Луиджи «спагетти-сĕтел» хатĕрлет, радио ярать – Мокринăна ташлама чĕнет. Ташлаççĕ, юрлаççĕ çапла...

### Юратакансен ячĕпе – палăк

2013 çулхи çу уйăхĕнче Киевра Юратакансен кĕперĕ патĕнче Мокринăпа Луиджи ячĕпе палăк вырнаçтарнă. Чуна хускатать – 62 çул уйрăм пурăннă хыççăн асаттепе асанне пĕр-пĕрне ăшшăн ыталаççĕ.

Темиçе çул каялла Мокрина Луиджи чĕннипе Сан-Лоренцо хулине çемйипе пĕрле кайса килнĕ. Оливăсем ÿсекен вĕтлĕхре сĕтел хатĕрлесе вăл хĕрарăма качча тухма ыйтнă, анчах... «Ăçта кайăп ĕнтĕ эпĕ, – именсе калаçать Мокрина-Мария, – пахча пур манăн, кушаксем – вĕсене пурне те Италие илсе кайăп-и?»

Мокрина-Мария «ухмах итальяна» иртнĕ çулла та çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче кĕтнĕ. Пÿртне шуратнă, Луиджи вырнаçакан пÿлĕмри стенасене сăрланă, сĕтел çине вăл маларах илсе килнĕ хаçатсене кăларса хунă. «Кукамай çапла мал ĕмĕтлĕ пулнине эпир тахçантанпах курманччĕ, – теççĕ мăнукĕсем. – Вăл пире нимĕн те каламастчĕ, çапах та чупса тенĕ пекех çÿретчĕ!» Анчах та вĕсем тĕл пулнăранпа 10 çул хушшинче пуçласа Луиджи таврăнман. Унăн инфаркт пулнă.

«Атте кравачĕ патĕнче эпир макарон тата пармезан сыр хунă икĕ сумка куртăмăр, – тет унăн кинĕ Каролина, – Киева каймалли билетсем çинче веничет çĕррин курупкиччĕ». Марийăна юратнă çынни вилни çинчен каламан.

Луиджипе Мокрина палăкĕ патне кашни кунах вун-вун мăшăр пырать. Ăна тĕкĕнсен юратнă çынран нихăçан та уйрăлмастăн теççĕ.

■ **Анна УЛЬЯНОВА.**

/«Аргументы и факты»/

*Чăн пулни*

# Генерал парни

***КППра тăратăп. Пирĕн çыхăну роти çумне ялан-лăхах çирĕплетнĕ наряд вăл – КПП. Вăрăмлатса каласан – чаç территорине кĕрсе тухмалли тĕп хапха. Манăн яланхи пост тесен те йăнăш мар-тăр. Ара, ротăри салтаксем Остерта ултă уйăх вĕреннĕ те, пĕрин те наряда çÿреме вăхăт çук – радиостанцисене, телефон çыхăнăвне тĕрĕслесех тăмалла. Эпĕ университет пĕтернĕ, анчах çар специальноçĕ илмен. Кама ямалла наряда? Паллах, мана! Хĕсмет вăхăчĕн çуррине çавăнтах тăрса ирттертĕм.***

...Алăк уçăлчĕ те генерал-майор кĕрсе тăчĕ. Дивизи командирĕ Крахов ку – тÿрех палларăм. Тин кăна полковникчĕ-ха. Ярт тăсăлса тăрса чыс патăм та телефонпа чаçри дежурнăя пĕлтертĕм. Ак тамаша, ку тата кам? Ун хыççăнах, çур минутранах, ылтăн пакунлă çар çынни курăнчĕ – чăн-чăн генерал тейĕн. Палламастăп – пирĕн мар. Чыс патăм та ун çулне пÿлтĕм.

– Документ!

– Генерал адъютанчĕ эпĕ! – тет çакскер.

– Документ!? – хамăн вырăнта та кăшкăрсах илтĕм, – прапорщик юлташ!!!

– Туртатăн-и?.. – сĕнет «прапор». «ТУ-134» сигарет пачки туртса кăларчĕ.

– Шăпах пĕтнĕччĕ-ха, – тетĕп, – пĕр сигарет памаççĕ, иккĕ – леш тĕнчене кайнă юлташа, вил тăпри çине хураççĕ, – илтĕм вара виççĕшне. Урама тухса туртрăмăр. Тата пилĕк минут çухатрĕ адъютант манпа пакăлтатса. Ахаль те генералран самаях кая юлнăччĕ апăрша. Полк командирĕн пÿлĕмне ăсатсах ятăм. Урăх ăçта пултăр-ха генерал?.. Унта лекнĕ адъютанта! Паллах, мана та – Севернин капитанран, чаçри дежурнăйран. Çакскер хăйне хÿтĕлесе пĕтĕмпех КПП дежурнăйĕ çине йăвантарнă: эпĕ айăплă иккен. Палламасăр нумай вăхăт тытса тăнăăна, документсене тĕрĕсленĕ. Тата унран туртмалли ыйтнăран вăхăт çухатнă имĕш.

– Салтакăн сигарет çук терĕн-и? – тĕлĕннĕ генерал. – Акă укçа, хăвăрт кăна туян та кĕртсе пар! Пилĕк минут сана, тĕрĕслетĕп! Салтака тата мĕн кирлĕ – ыйтса пĕл!..

– Акă, илсем! – виçĕ «ТУ-134» пачка кăларса тыттарчĕ прапорщик-адъютант мана 5 минутран.

Хирĕçлеме пăхрăм. Кăлăхах.

– Генерал приказĕ! – терĕ пат! татса. – Тата мĕн кирлĕ, мĕн çитмест? Çавна та пĕлме хушрĕ генерал!

– Çĕр аллă грамм пулсан – аванччĕ те, – тетĕп, – тăватă уйăх ĕнтĕ пĕр грамм та ăша яманни... Çара килнĕренпех. Кам шухăшланă-ха манăн шÿтлĕ сăмаха генерала каласа парасса? Вăл вара, «прапор» ĕнтĕ, пĕлтернĕ.

...1-2 эрне иртрĕ-ши, каллех – КППра нарядра. Генерал машини çитсе чарăнчĕ. Адъютанчĕ чупсах пычĕ ман пата.

– Эсĕ тăватă уйăх ăша яман терĕн-и-ха? Акă!.. – шарт! кăларса лартрĕ пĕр «чĕрĕк».

– Çук, çук, прапорщик юлташ, илместĕп, юрамасть! – эрехе хăвăрт кăна унăн кителĕн кĕсйине чиксе хутăм.

Тухрĕ. Калаçрĕ генералпа. Кĕçех кĕчĕ. Сĕтел сунтăхне уçрĕ те эрех кĕленчине унта хучĕ: «Генерал приказĕ!»

Тĕкĕнмерĕм «чĕрĕке». Çĕнĕ наряд та килчĕ мана улăштарма, шарламарăм. Ара, «стариксем» пулчĕç те – каласа пăх-ха, кăтарт çеç!.. Çапах та чĕрĕке пĕрле илтĕм, командира тыттартăм: «Генерал парни!», – тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартрăм.



– Юрать, аван! – терĕ те Рыбалко аслă лейтенант ăна каптеркăри тимĕр ешчĕке лартрĕ.

Каллех – нарядра. Ăçта тетĕр? КППра.

Машина çитсе чарăнчĕ.

– Леш, эрех юратакан салтак постра! – илтĕнчĕ сасă. Адъютант иккен. Генерала алăк уçса кăларчĕ.

– Ил-ха, унта, ... пур! – хушрĕ ăна генерал.

Адъютант чĕрĕк кăларчĕ те нимĕн тума аптăраса хытса тăчĕ.

– Боец валли вăл, пар! – хушрĕ комдив.

Эпĕ çирĕппĕн генерал умне утса пытăм, чыс парса:

– Сывлăх сунатăп, генерал юлташ! КПП дежурнăйĕ Филиппов рядовой! Çарта пулнă вăхăтра сыпса курман, сыпмастăп та! Прапорщика ку «чебурашкăна» каялла илмешкĕн приказ пама ыйтатăп!

– Сахалрах-и? – шÿтлесе илчĕ генерал. – Юрĕ, апла, сана хавхалантармалла урăх сăлтав тупма тивет, – утма пикеннĕскерех çаврăнса хушса хучĕ. – Округ хаçатне дивизири ĕçсем пирки çырсах тăратăн, маттур! Пĕлтерчĕç мана: сан пирки те, маларах хăварнă эрех пирки те! – унтан адъютантне: «Прапорщик!» – терĕ те аллипе сулчĕ.

Адъютант КППна чупса кĕрсе сĕтел сунтăхне «чĕрĕке» хума ĕлкĕрчĕ-ĕлкĕрчех. Дежурство пĕтсен «чебурашкăна» каллех рота командирне патăм. Юрать-ха, ĕçме юратакан офицер мар вăл. Пар-ха Севернин капитана!.. Мана КППран кăлармĕччĕ – тупăшлă вырăн – КПП!

Тепĕр уйăхран рота командирĕ мана кĕске отпуск пани çинчен полк командирĕн приказне вуланă хыççăн çула тухмалли документсене строй умĕнчех пачĕ. Ротăн радио класĕнче тимĕр ешчĕкрен икĕ чĕрĕк кăларса тыттарчĕ:

– Пушă алăпа тăван киле кĕме аванах мар, генерал парнипе каятăн! Отпускне те сана пама вăлах хушнă – черетсĕрех. Вĕçтер паянах!

■ **Анатолий ФИЛИППОВ,**
**В.И.Чапаев ячĕллĕ дивизи ветеранĕ**

*Пурнăç кукри*

# Ĕмĕрĕ сывлăх хуралĕнче иртнĕ

***Аннене, Елизавета Семеновна Максимовăна, ялта хисеплесе Лиссаппа тетчĕç. Мана та, кĕçĕн ывăлне, ÿсерехпе Лиссаппа Тули тесе чĕнме пуçларĕç.***

Анне 40 çул ытла медсестрара ĕçленĕ. 1929 çулта Шупашкарта медрабфакра 10 уйăхлăх курс çеç пĕтернĕ пулсан та алăура сыпписене вырăна питĕ ăста лартма пултарнă /çак ĕçе Хуракассинчи Римма аппана та вĕрентсе хăварнă/, ача çураттарма та ăна кăна чĕннĕ... Районта /кĕçĕн медперсонал хушшинче/ 1967 çулта «СССР сывлăх сыхлавĕн отличникĕ» палла чи малтан тивĕçнĕ.

Сĕмĕл пульницинче ĕçленĕ вăхăтра Е.Максимова трахомăпа аптăракан çĕр-çĕр çынна сыватнă. Хурăньялти, Малти Пукашри, Вăта Пукашри, ытти тăрăхри чирлисем патне те çитнĕ. Шкулта, клубра, чăпта мастерскойĕнче пуху е спектакль умĕн лекцидоклад сахал мар ирттернĕ. Концерт-спектакльсене хастар хутшăнса ырă ята тивĕçнĕ, ял Канашĕн депутатне темиçе хут суйланнă. 6 ачине пĕччен çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Атте Мускавшăн пынă çапăçусенче сусăрланса таврăнсан нумай пурăнайман.

30-мĕш çулсенче Лиза Семеновна трахсестрапа упăшки Шуркассинче /паян Çĕнĕ Шупашкара кĕрет/ ĕçленĕ, вăрманçă арăмĕ патĕнче хваттерте пурăннă. Владимир Янташри промэртеле ертсе пынă. Иккĕшĕ те Анатолий Тогаевăн чаплă хорне çÿренĕ. Николай Пиктемир, Кузьма Намангин, Киремет Петти унта хăйсен сăввисене вуланă. Качча тухиччен çамрăк трахсестра Кÿкеç çывăхĕнчи Патирекре, Çармăсри Оршанкă яленче ĕçленĕ.

Унччен хальхи пек «васкавлă пулăшу» пулман. Медсестрасем те çитмен. Пирĕн хапха та, алăк та талăкĕпех питĕрĕнмен. Кам та пулин пулăшу ыйтма пымасăр пĕр çĕр те иртмен. Йытта та хапха çумне нихçан та кăкарман.

– Лиссаппа Володьăна çуна çинчех çураттарчĕ! – аса илетчĕ ферма ертÿçи Иван Гаврилов арăмĕ пирки сăмах тапратсан...

Çуна çинчех çуралнă ачана тăлăппа чĕркесе Сĕмеле чипе-рех илсе çитернĕ. Ача çирĕп сывлăхлă çитĕннĕ, çарта моряк пулнă. Туйĕнче Лиссаппана кĕпе тăхăнтартнă... Ун пек çуралнисем вун-вун! Акă Петя Казанов шăпи те çавнашкал. Вăл тивĕçлĕ канăва тухиччен ЧЗПТра участок пуçлăхĕнче ĕçленĕ.

■ **Лиссаппа ТУЛИ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

# Сăмах каçмăш

**Николай КРАСНОВ /Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**




1. Ансăр çул. 2. Тÿмелли хатĕр. 3. Чăваш поэчĕ, драматургĕ. 4. Пахча çимĕç. 5. Улăп хĕç-пăшалĕ. 6. Вăрманти вĕçен кайăк. 7. Çитменлĕх. 8. Авалхи тум. 9. Тимĕр «вĕрен». 10. Чĕр чун. 11. Хытă хут. 12. Ватă хĕрарăм, кинемей. 13. Вăрман «санитарĕ». 14. Унта хĕртĕнме каяççĕ. 15. Театрти вырăн. 16. Хваттер пайĕ. 17. Çурт кăшкарĕ. 18. Ÿсен-тăран. 19. Черчен япала. 20. «Хура ылтăн» турттармалли транспорт. 21. Çут çанталăк «ÿпки». 22. Унпа пÿрт пĕренисене витеççĕ.

**Сăмах каçмăш хуравĕсем:**

1. Сукмак. 2. Тукмак. 3. Кăлкан. 4. Кăшман. 5. Чукмар. 6. Куккук. 7. Кăлтăк. 8. Сăхман. 9.Сăнчăр. 10. Хăнтăр. 11. Картон. 12. Карчăк. 13. Кашкăр. 14. Кăнтăр. 15. Партер. 16. Балкон. 17. Каркас. 18. Кантăр. 19. Патрак. 20. Танкер. 21. Вăрман. 22. Тăпрас.

*Калам-ха*

# Хамăрла шухăшласа çырасчĕ

Юлашки çулсенче писательсен шутне кĕнĕ çыравçăсен кĕнекисем пайтах тухрĕç. Вĕсене интересленсех вулатăп. Анчах нумайăшĕ вырăсла шухăшласа чăвашла çырнă пек туйăнать. Авторсен ячĕсене асăнмăп – кÿрентерес килмест.

«Купăс калать» вырăнне «купăспа вылять» е «купăс çинче вылять, баян, гитара çинче вылять» – çапла çырнисене час-часах асăрхатăп. «Купăспа вылять» тесен купăса тетте вырăнне алла тытнă пек пулса тухать. «Купăс çинче вылять» тенине ăна урайне лартса ун çине хăпарса тăрса е утланса ларса мĕнпе те пулин вылянă пек ăнланатăн.

Тата «Выля, хут купăс!» конкурссем ирттереççĕ. Тĕрĕссипе, «Кала, хут купăс!» темелле. Такмак та пур:

Кала, кала купăсна,
Эс кăна хитре калан.
Ман çунакан чĕрене
Эсĕ кăна пусаран.

Ку йĕркесене халăх сăвва хывнă, кĕвĕленĕ. «Выля купăспа» темен-çке. Çыравçăсен çакна шута илесчĕ. Чăваш мĕн авалтан «качча каять», «авланать» тенĕ. Çамрăк çыравçăсен хайлавĕсенче «вăл çавăн çине авланать» йышши сăмахсем тĕл пулаççĕ. «Вăл ăна качча илет», – тесен тĕрĕсрех.

Çакăн пекрех çырнисем тĕлне çитетĕп те кăмăл хуçăлать, вулас килми пулать. Хитре калава илемсĕр, тĕрĕс мар сăмах çаврăнăшĕсем йăлт пăсса хунине курсан чунăм ыратать.

■ **Виктор СИМАКОВ**

пĕлтерӳ реклама
Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

**ОРГАНИЗАЦИЯ**
**продает**
**ОТРУБИ пшеничные**
в мешках по 25 кг.
Цена 120 руб.
**Тел. 74-46-00.**

## ПРОДАЮ

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**74.КамАЗ – сельхозвариант.** Т. 8-937-952-84-67.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**88.Грабли** от 23 тыс. руб., **плуги, картофелесажалки,** фрезы, **косилки.** Низкие цены. Всё новое! Тел.: 8-927-851-68-58, 8-937-955-98-02.

**89.Срубы** /3х3, 6х3/ и на заказ. Строим под ключ. Т. 8-909-300-31-21.

**90.СЕМЕНА люцерны** – оптом. Т.: 89033584014, 8/83532/ 61-2-81.

**719.Блоки керамзитобетонные** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Т. 89176776846.

**851.Кирпич, кольца.** Д-ка /вездеход манипулятор/. Т. 444407.

**910.Прицеп мотоблока** – недорого. Доставка. Т. 89053444735.

## УСЛУГИ

**25.Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот /распашные, откатные, автоматика/. Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**32.Наркология.** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение** колодцев: скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и доставка** ж/б колец. Т. 8-905-343-42-07.

**257.Наркология. Т. 8-927-667-33-68.** Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**70.Дом** с участком в любом состоянии. Т. 8-960-300-87-87.

**80.Землю, дом** в Чебоксарском, Моргаушском р-нах. Т. 489357.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## СУТАТĂП

**795.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Т. 89170664146.






## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.excomfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Доставка. Замер. Без выходных. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х-20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич,** брусчатку, кольца, ОПГС, песок, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**17.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, железные двери.** Обшивка вагонкой, пластиком, МДФ. Т. 89050281182.

**19.Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 89033225766.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА** пластиковые, железные **ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**33.Гравмассу,** песок, **керамзит, щебень, торф.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**38.ПЛИТЫ тротуарные** 400х400х50 – 420 руб./кв.м., 500х500х60 – 450 руб./кв.м. **Зимой дешевле.** Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**43.Натяжные потолки** за 1 день от 350 руб. Т. 89373972442.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

## *Саламлатпăр*



***Патăрьел районĕнчи Пăлапуç Пашьелĕнче пурăнакан <u>АНИСИМОВСЕНЕ:</u> вăрман хуçалăхĕнче нумай çул вăй хунă <u>Николай Порфирьевича</u> – 65 çулпа, мăшăрне, <u>Мелания Никоновнăна</u>, çуралнă кунĕпе чĕререн саламлатпăр, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, пархатарлă кун-çул сунатпăр.***

***<u>Анисимовсем, Ивановсем, Павловсем</u>***
***<u>тата ытти тăванĕ.</u>***

* * *



***Хаклă та юратнă аттене, мăшăра – Çĕрпӳ районĕнчи Чирічкассинчи <u>Юрий Михайлович АБРАМОВА</u> – çуралнă кун ячĕпе:***

***Çирĕп сывлăх та хастарлăх,***
***Ĕмĕр иксĕлми вăй-хал.***
***Çут телей те савăнăç, ырлăх***
***Кăмăлтан сунатпăр халь.***
***Нихăçан вăй-хал ан чактăр,***
***Пултăр ăнăçу ялан.***
***Пурте ăшăн саламлатпăр***
***Ыр сунса сана чунтан.***

***<u>Салампа мăшăрĕ, хĕрĕ, 2 ывăлĕ,</u>***
***<u>мăнукĕсем, тăванĕсем.</u>***

* * *



***Хаклă çыннăмăра – паллă журналиста, публициста, сăвăçа, Вăрнар районĕн «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакторĕнче нумай çул ĕçленĕ <u>Михаил Алексеевич ВАСИЛЬЕВА</u> – юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр, хурçă пек çирĕп сывлăх сунатпăр.***

***Михаил Алексеевич! Сирĕн кун-çул утти пуян та пархатарлă. Тăван халăхăмăра сумлă кĕнекесемпе малашне те савăнтармалла пултăр. Журналистикăпа литература анинчи ăсталăхăрпа хастарлăхăр, çырас ăнтăлăвăр нихăçан та ан иксĕлчĕр. Çутă малашлăх, телей Сире.***

***<u>Хисеплесе – Шупашкарта пурăнакан</u>***
***<u>Васильевсен çемйи.</u>***

Администрация Чебоксарского района извещает о намерении обменять земельные участки, отнесенные к категории "земли сельскохозяйственного назначения":
земельный участок площадью 0,4935 га с кадастровым номером 21:21:100301:484;
земельный участок площадью 1,2150 га с кадастровым номером 21:21:100301:502,
расположенные по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Вурман-Сюктерское сельское поселение, с разрешенным использованием для сельскохозяйственного производства. Заявления и письменные возражения принимаются с 05.02.2014 по 04.03.2014 г. по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15 (каб. 20).Телефон для справок (8-83540) 2-15-92.

Администрация Комсомольского района информирует о предоставлении в аренду земельного участка сроком на 49 лет из земель сельскохозяйственного назначения:
- с кадастровым номером 21:13:100101:20, площадью 4600 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Комсомольский район, Комсомольское сельское поселение.
Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429140, Чувашская Республика, с.Комсомольское, ул. Заводская, д. 57. Справки по телефону: 8(83539) 51567.

## ПРОДАЮ

**56.Мебель корпусную** собственного производства. Т. 684028.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.Новинки от КЛОПОВ, МУРАВЬЁВ и ТАРАКАНОВ.** Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**64.Комнаты** в общежитии в г. Чеб-ры, пр. Тракторостроителей, д. 7: **13,4 кв. м** – 750000 руб., **17,3 кв. м** – 850000 руб. Т. 89875754430.

«Текстильмаш» АУО коллективĕ генеральнăй директор çумĕ пулса ĕçленĕ Роберт Михайлович Васильев мăшăрĕ
**Сталина Петровна ВАСИЛЬЕВА**
сарăмсăр вилнĕ пирки чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

# Саламлатпăр



*«Çиччĕн çуралса пĕр килте ӳснĕ,
Мĕншĕн уйрăлмалла пулнă-ши?» Юрăри çак сăмахсене хурланса кăна йышăнмалла мар. Ара – пурнăç яланах малалла. Комсомольски районĕнчи Анат Тимĕрчкассинче çуралса ӳссен эпир те çиччĕн тĕрлĕ çĕре салантăмăр. Анчах тăванлăх туйăмĕ нихăçан та сӳнмест. Паян пысăк çемьери тăваттăмĕшне – Куславкка районĕнчи Тĕрлемесре пурăнакан* ***Валентина Петровна КОРОТКОВĂНА*** *– 55 çул тултарнă ятпа саламлатпăр: пĕтĕм чун-чĕререн, ăшшăн, юратса, тата нумай-нумай çул пурăнма ырлăх та сывлăх сунса.*

*Аппăшĕсемпе тетĕшĕн, йăмăкĕсен – Леонтьевсен, Гришинсен, Филипповсен, Сурнаевсен – çемйисемпе пĕрле юбиляра упăшки Николай, хĕрĕ Антонина, ывăлĕ Алексей, вĕсен çемйисем тата тăхлачи саламлаççĕ.*

# Халăх пултарулăхĕ вăй илет

Чăваш Ене
Культура çулталăкĕ



*Авалхи йăла-йĕркене çĕнĕрен чĕртме тытăнни – ырă пулăм. «Аваллăхсăр пуласлăх çук», – тенĕ. Пирĕн несĕлĕмĕрсен çул-йĕрне тата йăли-йĕркине пĕлмеллех. «Халăха сыхласа хăварас ĕç чи малтан кил-йышран, çемьерен пуçланать. Ашшĕ-амăшĕ пĕр-пĕринпе, çав хушăрах ачисемпе те чăвашла калаçсан вĕсене халăхăмăрăн йăли-йĕркипе, чĕлхипе тата таши-юррипе мĕн пĕчĕкрен паллаштарса пырсан, юратма-хисеплеме вĕрентсен çак ĕçе пурнăçлама çăмăлрах пулĕччĕ», – тенĕ республика Пуçлăхĕ Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче. Паллах, унта хускатнă шухăшсене пире кашнинех пырса тивеççĕ. Малалла ку енĕпе тата та тăрăшарах ĕçлеме хистеççĕ.*

Республикăри кашни районтах фольклор ушкăнĕ пур. Вĕсем йăла-йĕркемĕре упраса ăна халăх патне çитерессипе пысăк ĕç тăваççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнче вара ку тĕлĕшпе юлашки çулсенче уйрăмах курăмлă ĕçлени палăрать.

Çакна районта çулсерен иртекен «Иксĕлми Чутай çăл куçĕсем» фольклор фестивалĕ те çирĕплетет. Палăртма кăмăллă: енчен те 2012 çулта çак мероприятие 11 коллектив хутшăннă пулсан, иртнĕ çул – 13. Чи кирли вĕсен ячĕсем ку тăрăхри шыв-шур е кӳлĕ ячĕсемпе çыхăнни. Акă «Шокăль» – Сăр хĕрринчи илемлĕ вырăн, «Çартмас» – Хĕрлĕ Чутай ял тăрăхĕнчи вырăн, «Урпаш – Хусанушкăнь ял тăрăхĕнчи шыв тата ытти те. Хĕрлĕ Чутайри культурăпа кану центрĕ çумĕнчи «Шокăль» фольклор ушкăнне сӳрекенсен юрри-ташши те, тумĕсем те чуйăла. Тĕрлĕ ӳсĕмри те сӳрет кунта. Вĕсем несĕлсен йăли-йĕркине ăша хываççĕ, кашниех çĕнĕ юрă-кĕвĕ вĕренме тăрăшать. Фольклор ушкăнĕ сӳрекенсем аслă ăру çыннисенчен авалхи Чутай тăрăхĕнчи йăла-йĕркене тĕпчеççĕ. Хăйсем пĕлнине халăх патне çитерме тăрăшаççĕ. Иртнĕ çул акă коллектив Чутай тăрăхĕнчи туй-шилĕке ăста кăтартрĕ. Тĕрĕссипе, юлашки çулсенче авалхи туй илемĕн сĕмĕ пĕтсе пыни вăрттăнлăх мар. Савăнăçлă саманта чылайăшĕ столовăй-кафере «майралла» тăхăнса паллă тăвать. Унта авалхи кĕвĕ-çемĕ те илтĕнмест.

Мăн Этменсем икĕ фольклор ушкăнĕ йĕркеленĕ. «Савăнар-и» ушкăн çĕнĕ пӳрт уявне кăтартса панă.

Ку тăрăхри чăваш хĕрарăмĕн кĕпи-саппунĕ хăйне евĕрлĕ. Мăн асаннесем авалтан шап-шурă пиртен çĕленĕ кĕпе аркине тата хулчине чăваш тĕррипе илемлетнĕ. Халĕ тĕрĕ улшăннă. Пысăк та илемлĕ чечексем Чутай тумне самана таппине çывхартни куç кĕрет. Саппунĕсем сутăрах симĕс, кăвак, хĕрлĕ тĕслĕ. Авал вăйăсенче е туй-шилĕкре пирĕн тăрăхра питлĕх çапса ташласа хăйне евĕр кĕвĕ çемми кăларнине те фольклор ушкăнĕсем тепĕр хут аса илтерчĕç. Кашни коллектив харпăр хăй тăрăхĕнчи йăла-йĕрке уйрăмлăхне кăтартма тăрăшрĕ. Палăртмалла: Хĕрлĕ Чутай хутлăхĕ илемлĕ, чуна тыткăнлакан уçă сасăллă юрăçпа пуян. Çав вăхăтрах кунта маттур ташăçă та тĕрлĕ инструмент калакан ăста та çук мар.

Ача сачĕсемпе шкулсенче те фольклор ушкăнĕсем йĕркелени, чăваш тумне, йăла-йĕркене упрама тăрăшни пĕлтерĕшлĕ. Чи кирли – çак пуçарăва çитĕнекен ăру та хастар хутшăнни.

■ **Юлия МАРЕЕВА**

# Гороскоп

**Нарăс, 3-9**

**Сурăх.** Эрнен малтанхи кунĕсенче вăй-хал тапса тăнине туятăр, çавăнпах унччен пуçăннă ĕçсене кĕске вăхăтрах вĕçне çитеретĕр. Ĕçтешсемпе калаçни-канашлани те усă кӳрĕ, анчах вĕсене кӳрентересрен асăрханăр – кашни сăмаха тĕплĕ шухăшласа калăр. Пуçлăхăр хăйĕн патне чĕнсен те ытлашши ан пăкăлтатăр.

**Вăкăр.** Пĕрремĕш вырăнта – çемье. Килпе çыхăннă ыйтусене татса панă май самаях тăкакланмалла пулĕ. Эрнен иккĕмĕш çурринче кирек мĕнле ĕçе кӳлĕнсен те хăвăра алăра çирĕп тытăр, кирлĕ-кирлĕ маршăн ан вĕчĕрхенĕр – чирлесе ӳкес хăрушлăх пур. Канмалли кунсенче килте ан ларăр – сывăх çыннăрсемпе ăçта та пулин çул тытăр.

**Йĕкĕреш.** Çĕнĕ ĕçе пуçăнмашкăн питĕ ăнăçлă вăхăт. Иккĕленӳллĕ ыйтусене пăтăрмахсемсĕр татса паратăр. Çапах пуçлăхăр умĕнче ята ярасран асăрханăр, унсăрăн палăртнине пурнăçа кĕртме май килмĕ. Эрне вĕçĕнче аçăр-аннĕр патне çитсе килме тăрăшăр – вĕсем пулăшу кĕтеççĕ.

**Рак.** Тунсăха ан путăр. Пурнăçланайман ĕмĕтĕрсемшĕн ан пăшăрханăр. Хăвăр çине ытлашши ĕç илни те – вырăнсăр. Юратнă çыннăра, сывăх юлташăрсене хаваслантарма меслет тупăр. Сире çĕнĕ ĕç сĕнеççĕ-и? Çĕлтăрсем асăрхаттарнине ĕненес тĕк, ăна йышăнмалла мар.

**Арăслан.** Хăвăрăн шухăша сурчăк сирпĕтсе ăнлантарас килет-и? Анчах çакă кирлех-ши? Çĕлтăрсем хăвăра мăнна хума сĕнмеççĕ. Çакă ĕçтешĕрсен, юлташăрсен шухăшне улăштарма пултарĕ. Ас тăвăр: эсир – тĕнче кăвапи мар. Урамра каччă /хĕр/ сирĕнпе паллашасшăн-и? Пĕр-икĕ сăмахпа перкелешсен те чунăра ан усăр.

**Хĕр.** Çĕнĕ ĕçе кӳлĕнме палăртнăччĕ-и? Кăштах тăхтăр. Ĕçпе, пурлăхпа çыхăннă килĕшӳсене алă пусма ан васкăр. Пушă мĕн пур вăхăта савнă çыннăрсемпе ирттерĕр: пĕрле уçăлса çӳрĕр, театра кайса курăр... Канмалли кунсене килтен ан тухăр.

**Тараса.** Халĕ сирĕн çак таранчен пурнăçланине пĕтĕмлетмелли, малашлăха палăртмалли тапхăр. Тапса тăракан вăй-халăрпа тĕрĕс усă курăр, ĕмĕтлене-ĕмĕтлене çӳл тӳпене ан хăпарăр: çитес вăхăтра тумалли ĕçсене тĕплĕ шухăшласа палăртăр. Иртен-çӳренпе калаçнă чухне асăрханулла пулăр!

**Скорпион.** Ĕç эрни, çавăнпах пуç çĕклеме те вăхăт пулмĕ. Пуçлăхăрпа канашламалла-и? Иккĕленсе ан тăрăр, унăн пӳлĕмне хăрамасăр кĕрĕр. Ахăртнех, вăл сирĕн ыйтăва çийĕнчех усăмлатĕ. Ăнăçу вăрттăнлăхĕ – пысăк ăсталăх, ăна туллин кăтартма мехел çитерĕр.

**Ухăçă.** Пуласлăха витĕр куратăр тейĕн – сире пур ĕçре те ăнĕ. Çул çӳреве тухма, ӳт-пĕве спортра писĕхтерме, пысăк тавар туянма палăртнă-и? Апла мĕн туса ларатăр? Ĕмĕтĕрсене пурнăça кĕртĕр. Унсăр пуçне тĕл пулуран тĕл пулăва васкама тивĕ. Çапах вăхăта мăшăрăрпа /савнийĕрпе/ ытларах ирттермеллине асра тытăр.

**Ту качаки.** Шел те, кăткăс эрне. Юлташăрсемпе тĕл пулсан харкашасран сыхланăр. Пĕр шухăшлă пулмасан та лару-тăрăва лайăхлатма ăс çитерĕр – шӳтлĕр е çăвара шыв сыпăр. Канмалли кунсенче вара кил-тĕрĕшре тăрмашмалла пулĕ.

**Шыв тăкан.** Тимлĕхе пĕр çеккунтлăха та ан çухатăр, нимĕнле ыйтăва та хыпаланса ан хуравлăр. Ахăртнех, çурăм хыçĕнче сирĕн пирки япăх калаçаççĕ. Çавăнпа çывăх çыннăрсемпе кăна чуна уçма пултаратăр.

**Пулăсем.** Çанă тавăрсах ĕçлетĕр! Ан пăшăрханăр: пуян тавра курăмăр, пысăк хутшăнăвăр, çынсемпе хутшăнмакалаçма пĕлни кирек мĕнле йывăр ĕçе те вăхăтра пурнăçлама пулăшĕ. Çапах документсемпе аппаланнă чухне йăнăшасран асăрханăр. Канмалли кунсенче çул-йĕр çинче тимлĕ пулăр.

# Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 01.02 | - 19 | - 23 |
| 02.02 | - 14 | - 11 |
| 03.02 | - 9 | - 12 |
| 04.02 | - 11 | - 13 |
| 05.02 | - 14 | - 23 |
| 06.02 | - 21 | - 27 |
| 07.02 | - 20 | - 20 |


чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Сывлăх" – 11524,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.В.ГРИГОРЬЕВ



Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95–Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru



Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13. 56-00-23 – издательство директорĕ.



РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.



Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8843. Заказ 329.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.